К С(Чув)
С 30
Ч-34554

ий СЕМЕНТЕР

# ЧĂВАШ ПИКИ

*Юрăсем*



Национальная библиотека ЧР
4-037554

Юрий СЕМЕНТЕР

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

# ЧĂВАШ ПИКИ

Юрăсем

Шупашкар — 2002

УДК 894
ББК 84 Чув. 7-5
С 30

**Ку кĕнекене Чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер чăваш композиторĕсемпе хĕрĕх пилĕк çул хушшинче çырнă нумай-нумай юрăран çĕр аллăшне суйласа илсе кĕртнĕ.**

ПРОВЕРЕНО
20 10,11

4 - 37554

Национальная библиотека
Чувашской
Республики

© Ю. С. Сементер, 2002 ç.

# УÇЛАНКĂРИ ПАЛАН

*Филипп ЛУКИН кĕвви*

Уçланкăри палан
Шап-шурă çурăлсан,
Эпир сăмах татсаччĕ санпалан.
Кĕрхи кунсем çитсен,
Паланăмăр пиçсен
Эс таврăнма пулсаччĕ аякран.

Сана ăсатсанах,
Тăм тиврĕ палана,
Шап-шур чечекĕ ӳкрĕ çĕр çине.
Çавна эс пĕлтĕн-ши,
Çавна эс сисрĕн-ши, –
Тăван яла килмерĕн кĕркунне.

Мана курсан ялан
Пуçне усать палан,
Туять вăл эпĕ саншăн çуннине.
Ан ман, савни, ан ман,
Халь хĕп-хĕрлех палан,
Пире кĕтсе упрать вăл çырлине.

# ШУРĂ-ШУРĂ АКĂШСЕМ

*Филипп ЛУКИН кĕвви*

Шурă-шурă акăшсем
Тӳпене çĕкленнĕçем
Акăш пек ачаш саспа
Эп калатăп сан ятна,
Мамăк пек çунатăмпа
Эп вĕçетĕп сан патна,
Савниçĕм.

Çăлтăр куçлă чечексем
Ыйхăран вăраннăçем
Чечекле чечен лĕхпе
Эп калатăп сан ятна,
Çамрăк çĕмĕрт çеçки пек
Сĕртĕнетĕп кантăкна,
Савниçĕм.

Пахчари саркайăксем
Юррине пуçланăçем
Сарă кайăк чĕлхипе
Эп калатăп сан ятна,
Сар хĕвел пек чĕрӳпе
Ăнланан-ши эс мана,
Савниçĕм.

# ЮРРĂМПА САЛАМЛАТĂП САНА

*Филипп ЛУКИН кĕвви*

Шурăмпуç парнелет кĕмĕл сывлăм,
Сар хĕвел çупăрлать таврана.
Пархатарлă Чăваш çĕрĕ-шывĕ,
Юррăмпа саламлатăп сана.

Ĕç тытать пин те пин хĕр те ывăл
Çĕнетмешкĕн ялпа хулана,
Ешĕл тумлă Чăваш çĕрĕ-шывĕ,
Юррăмпа пулăшатăп сана.

Ытарми кĕввине шăпчăк хывĕ
Кĕмĕл уйăх ансан пахчана.
Çĕрĕм-шывăм, Чăваш çĕрĕ-шывĕ,
Юррăмпа ыталатăп сана.

# ÇĔРĔМ-ШЫВĂМ, ЧĂВАШ ЕН

*Филипп ЛУКИН кĕвви*

Çĕрĕм-шывăм, Чăваш ен,
Ешĕл аркăллă çаран.
Анне евĕр илĕртен
Эс пире мĕн ачаран.

Çĕрĕм-шывăм, Чăваш ен,
Кĕмĕл тинĕс пек уй-хир.
Эс пире ĕçе чĕнен,
Çавăнпа ĕçчен эпир.

Çĕрĕм-шывăм, Чăваш ен,
Çĕр пин юрăллă тĕнче,
Çамрăклан та чечеклен
Анлă Атăл хĕрринче.

## ПАТТĂР АНДРИЯН

*Филипп ЛУКИН кĕвви*

Тӳпере вĕçсе çӳрерĕн
Кăйкăрпа пĕр тан,
Эс чăваш ятне çĕклерĕн,
Паттăр Андриян.

*Хушса юрламалли:*

Шуршăлтан салам яратпăр,
Шур Шупашкартан,
Юрăра сана мухтатпăр,
Паттăр Андриян.

Уйăха салам каларăн
Анлă Атăлтан,
Çăлтăра та эс пуç тайрăн,
Паттăр Андриян.

Вăй хуратăн, тăрăшатăн
Халăхшăн ялан,
Ĕçӳпе çунат хушатăн,
Паттăр Андриян.

## УНКĂ ШЫВĔ

*Филипп ЛУКИН кĕвви*

Хĕвелпе çиçсе выляççĕ
Ункăн çутă хумĕсем,
Çавала илсе каяççĕ
Янăравлă кĕвĕсем.

*Хушса юрламалли:*

Ункă шывĕ, Ункă шывĕ,
Савăк юрă эс юрлан.
Савăк юрă эс юрлан,
Чăваш çĕрĕ пуянран.

Уй-хирте хастар ĕçлеççĕ
Маркасем те ишексем,
Кунсерен илемленеççĕ
Тăрăнсем те чатуксем.

Туллирех çĕршыв кĕлечĕ
Тырă-пулă ăннăçем,
Çĕн кун-çулăн çĕн тивлечĕ
Ыталать пире, туссем.

# АН ВАСКА

*Филипп ЛУКИН кĕвви*

Ан васка, пикеçĕм, ан васка,
Килелле утмашкăн ан васка.
Чĕрери калас сăмахăма
Эп ĕлкĕреймерĕм калама.
Ан васка...

Ан васка, савниçĕм, ан васка,
Алăкна уçмашкăн ан васка.
Тепĕр хут сăнна пăхса илем,
Кайăк пек çунатланса çӳрем,
Ан васка...

Ан васкаччĕ, чунăм, ан васка,
Сывă пул темешĕкн ан васка.
Санпалах пуласшăн-çке чĕрем,
Саншăн çеç вăл тапĕ ĕмĕрех,
Ан васка...

# КĔТЕРНЕ

***Филипп ЛУКИН кĕвви***

Кĕтерне, кăтартсам аллуна,
Ылтăн теççĕ-çке пурте ăна.
Ылтăнах-мĕн, чăнах ылтăнах:
Ахальтен ял-йыш çĕрĕ сана
Юмахри пек тыр-пул парас çук,
Çĕршыв ылтăн медаль парас çук.

Кĕтерне, юрласам юрруна,
Кĕмĕл теççĕ-çке сан сассуна.
Кĕмĕлех-мĕн, чăнах кĕмĕлех:
Ахальтен аслă ял илтмелле
Шăнкăрав пек ян-ян янрас çук,
Каччăсен канăçне татас çук.

Кĕтерне, ташласам ташшуна,
Акăш теççĕ-çке пурте сана.
Акăшех-мĕн, чăнах акăшех:
Ахальтен кайăкхур-тантăшсем
Сан тавра пуç тайса ишес çук,
Санпала сывлăша вĕçес çук.

## НУМАЙ ПУЛАТЬ ЭСИР КИЛМЕННИ

*Филипп ЛУКИН кӗвви*

Нумай пулать эсир килменни,
Пӑри пӑтти пӗрле ҫименни.
Пирӗн ҫула манса кайрӑр-ши,
Тупаймасӑр калле утрӑр-ши?

Нумай пулать сире курманни,
Сар сак ҫине пӗрле ларманни.
Пиртен лайӑх юлташ тупрӑр пуль,
Вӗсем патне сукмак хыврӑр пуль.

Ӗмӗрлекен ӗмӗр иккӗ мар,
Тӑвансем пек тату пурӑнар.
Пурри-ҫукки – ялан ҫурмалла,
Тус-юлташӑн ҫапла пулмалла.

## ЮРАТУ

*Филипп ЛУКИН кӗвви*

Ан васка, пикем, сарӑях пикем,
Ҫут Ҫавал шывне итлесем, пикем,
Вӑл сана кӗтет, юррине юрлать,
Сарӑях ача саламне калать.

Ан васка, пикем, сарӑях пикем,
Хурӑнсар шавне итлесем, пикем,
Вӑл сана кӗтет, юррине юрлать,
Сарӑях ача ёмӗтне калать.

Ан васка, пикем, сарӑях пикем,
Тинӗс пек хире итлесем, пикем,
Вӑл сана кӗтет, юррине юрлать,
Сарӑях ача шухӑшне калать.

## КИЛСЕМ, САВНИ

*Филипп ЛУКИН кĕвви*

Эп сана юратса чĕререн
Шăпчăкпа танлаштартăм ун чух.
Шăпчăк халь те юрлать каçсерен,
Анчах эсĕ, савни, кунта çук.

Эп сана юратса чĕререн
Куккукпа танлаштартăм ун чух.
Авăтать-çке куккук кунсерен,
Анчах эсĕ, савни, кунта çук.

Эп сана юратса чĕререн
Тăрипе танлаштартăм ун чух.
Тăри халь те юрлать тӳпере,
Анчах эсĕ, савни, кунта çук.

## ÇУРХИ ШАНЧĂК

***Филипп ЛУКИН кĕвви***

Çуркунне шывсем шавлаççĕ
Çыранран туха-туха,
Туйăмсем чечек акаççĕ
Сар хĕвеллĕ улăха.
   Юхса кайрĕç,
   Юхса кайрĕç пулĕ шăнкăр шывĕсем,
   Таврăнаймĕç каялла вĕсем.

Улмуççи пахчи шап-шурă
Туй пĕркенчĕкĕ çакать.
Чĕртеймест-ши савăк юрă,
Тусăм, пирĕн шанчăка?
   Вĕçсе кайрĕç,
   Вĕçсе кайрĕç пулĕ пирĕн шăпчăксем,
   Таврăнаймĕç каялла вĕсем.

Майĕпен шывсем чакаççĕ,
Тăкăнаççĕ чечексем.
Пуç тайса салам калаççĕ
Таврара уйсем-хирсем.
   Çук, иртмен-ха,
   Çук, иртмен-ха, тусăм, çутă çуркунне,
   Çитеймен-ха кĕмĕл кĕркунне.

# АН КАЙ, САВНИ

*Филипп ЛУКИН кĕвви*

Çут уйăх шунăçем
Çунаççĕ çăлтăрсем,
Çăлтăрсем çеç çунаççĕ-и паян?
Эс те туян аван,
Эп те туяп аван:
Çунаççĕ пирĕн çамрăк чĕресем.

Тухăç хĕрелнĕçем
Юрлаççĕ шăпчăксем,
Шăпчăксем çеç юрлаççĕ-и паян?
Эс те туян аван,
Эп те туяп аван:
Юрлаççĕ пирĕн шухă чĕресем.

Ан васкасам, савни,
Кăштах тăхта, савни,
Ан кай, савни, юлас килмест санран.
Эс те туян аван,
Эп те туяп аван:
Ялан пĕрле пуласшăн чĕресем.

## ИКĔ ПУÇКĂШĂЛĔ

***Филипп ЛУКИН кĕвви***

Иккĕн çыхсаттăмăр икĕ пуçкăшăлĕ
Утмăлтурат чечекне пуçтарса,
Тем самантра-çке çĕкленчĕ çил вăшăлĕ
Кăшăлсăр юлтăмăр иккĕн тăрса.

*Хушса юрламалли:*

Икĕ пуçкăшăлĕ,
Икĕ пуçкăшăлĕ,
Чăрсăр шывпа юхса кайрăр çĕрле,
Икĕ пуçкăшăлĕ,
Икĕ пуçкăшăлĕ,
Хăш çаврăма-ши çитейрĕр пĕрле?

Алă сулса сире иккĕн ăсатрăмăр
Хум хыçĕнче курăнми пуличчен.
Усăннă пирĕн мăшăр çунатăмăр –
Иккĕн çӳрерĕмĕр шăппăн ирччен.

Утмăлтуратăмăр, утмăлтуратăмăр,
Хăвăрт сӳнтертĕн сенкер çăлтăрна.
Темĕн шырарăмăр, темĕн çухатрăмăр,
Халĕ пĕччен асилетĕп сана.

# УЛМА ПАХЧИНЧЕ

***Филипп ЛУКИН кӗвви***

Кӗрсем, савниҫӗм, Саврӑш пахчине,
Тутан, савниҫӗм, хӗрлӗ улмине.
Хӑмач тӗс парӗ ӗмӗрлӗх сана,
Телей хӗлхемӗ пиллӗ вӑл чуна.

Иртсем, иртсем, пикеҫӗм, малалла,
Сап-сар улма хӑех кӗрет алла,
Хӗвел сӑнне парнелӗ вӑл сана,
Хӗвеллӗн упрӗ ытарми сӑнна.

Килсем, савниҫӗм, шур улма патне,
Сана калать вӑл ӑшӑ саламне.
Ятуллӑ пултӑр яланах яту,
Пехиллӗ пултӑр пирӗн юрату.

4-37554
Национальная библиотека
Чувашской
Республики



2. Заказ № К-3569.

# МĚН-МА ПĂХАТĂН МАН ÇИНЕ

## Романс

*Филипп ЛУКИН кĕвв.*

Мĕн-ма пăхатăн ман çине
Хĕвел пек ăшă куçпала,
Ирĕлтеретĕн чĕрене
Таçта чĕнен хăватпала?

Мĕн-ма калатăн ятăма
Çăлкуç пек шăнкăр сасăпа,
Çеçке пек çепĕç туйăма
Ăсса илес пек ывăçпа?

Мĕн-ма кĕрнеклĕ кăмăлу
Сенкер тӳпе пекех таса,
Ян-ян янрать хитре куллу
Чуна ачашшăн лăпкаса?

Санри паха асамлăха
Туйма, савниçĕм, эп хавас.
Анчах хамра çав ырлăха
Мĕнле тупас, мĕнле тупас?

# ЫЛТĂН ÇĔРĔ

*Филипп ЛУКИН кĕвви*

Чупса кайрĕ кăлтăр-кăлтăр
Ылтăн çĕрĕ аллăмран,
Сӳнсе ларчĕ çутă çăлтăр,
Сӳнсе ларчĕ умăмрах.
    Эп шырарăм, ай, шырарăм,
    Эп шырарăм çĕрĕпе,
    Шыраса эп тупаймарăм
    Хамăн ылтăн çĕрĕме.

Хăш çулпа çӳрен халь, тусăм,
Çывăхра е аякра,
Çунса пĕтнĕ юратушăн
Кулянан-ши хушăран?
    Чупса кайрĕ кăлтăр-кăлтăр
    Ылтăн çĕрĕ аллăмран,
    Сӳнсе ларчĕ çутă çăлтăр,
    Сӳнсе ларчĕ умăмрах.

## ЭПИР ЁҪЕ ТУХСАССĂН

*Филипп ЛУКИН кĕвви*

Эпир ёçе тухсассăн,
Алла штурвал тытсассăн,
Ылтăн тырă пуç таять,
Сар кĕлете хăй каять.

Эпир ёçе тухсассăн,
Станок умне тăрсассăн,
Яш кăкăрта юн вĕрет,
Сив тимĕре чун кĕрет.

Эпир ёçе тухсассăн,
Çĕнĕ никĕс ярсассăн,
Çурт хĕвелрен уртăнать,
Тӳпенелле туртăнать.

Эпир уяв тусассăн,
Кĕрекене ларсассăн,
Хĕр-пикисем – иçĕм пек,
Йĕкĕчĕсем – çиçĕм пек.

# КĂМĂЛ-ТУЙĂМ

***Григорий ХИРБЮ кĕвви***

Çамрăксем чечек пек илĕртӳллĕ, ырă
Çĕмĕрт çеçке çурнă çепĕç вăхăтра.
Шăрататать тавралăх çĕкленӳллĕ юрă,
Чун-чĕре çунать-çке вутлăн кăкăрта.

Пикесен пит-куçĕ çырла пек илемлĕ
Çĕр çырли сĕтеклĕн пиçнĕ вăхăтра,
Юрату асамĕ тыткăнлать хĕлхемлĕн,
Чун-чĕре çунать-çке вутлăн кăкăрта.

Ĕмĕтсем çиçеççĕ çут хĕвеллĕн, ăшшăн
Сад улми саралнă савăк вăхăтра.
Ытарми çĕршывшăн, çирĕп юратушăн
Чун-чĕре çунать-çке вутлăн кăкăрта.

# САН КУҪУСЕМ

*Григорий ХИРБЮ кĕвви*

Чӑн тӳпере ҫич ҫӑлтӑр мар, ик ҫӑлтӑр,
Чӑн тӳпере ҫич ҫӑлтӑр мар, ик ҫӑлтӑр:
Йӑлкӑшаҫҫӗ санӑн хӑмӑр куҫусем,
Умӑмра ҫиҫсе тӑраҫҫӗ ҫутисем.

Чӑн тӳпере ҫич ҫӑлтӑр мар, ик ҫӑлтӑр,
Чӑн тӳпере ҫич ҫӑлтӑр мар, ик ҫӑлтӑр:
Сирпӗтеҫҫӗ сивӗнми вӗри хӗлхем,
Ҫунтараҫҫӗ ҫамрӑк чӗрене вӗсем.

Чӑн тӳпере ҫич ҫӑлтӑр мар, ик ҫӑлтӑр,
Чӑн тӳпере ҫич ҫӑлтӑр мар, ик ҫӑлтӑр:
Савнӑ тусӑм, эс ачашшӑн пӑхнӑҫем
Юратни ҫинчен калаҫҫӗ куҫусем.

## ХĂМЛА ПАХЧИ

*Герман ЛЕБЕДЕВ кĕвви*

Хĕрсем, шăратар-и юррине
Татнăçемĕн ылтăн хăмлине.
Хăмла пахчи телей пахчи пек,
Пирĕн пурнăç хĕвел шевли пек.

Лăпкăн-лăпкăн çилĕ вĕрнĕ май
Уççăн-уççăн, юррăмăр, ян кай.
Ĕçĕмĕрсем ăнса пынăран
Савăк кĕвĕ янăрать ян-ян.

Ав килеççĕ маттур йĕкĕтсем,
Йăл кулаççĕ пирĕн савнисем.
Эй, хăмламăр, ешĕлех хăмла,
Эс çĕклетĕн пирĕн кăмăла.

## ЧĂВАШ ЕН ВАЛЬСĔ

***Герман ЛЕБЕДЕВ кĕвви***

Йăлтăр-йăлтăр çуталаççĕ
Анлă Атăл хумĕсем,
Атăла пуçне таяççĕ
Чăваш ен вăрманĕсем.
Ăшă çил çӳрет хаваслăн
Уй-хире ачашласа,
Ешерет умри пуласлăх
Тинĕс евĕр хумханса.

Тав сана, тав сана,
Хамăр Чăваш ен,
Тав сана, тав сана,
Савнă Чăваш ен.

Тӳперен килет хĕвеллĕн
Çурхи ырă пархатар,
Çунатне сарать илемлĕн
Шурă акăш – Шупашкар.
Пурнăç туйăмĕ яланалăх
Аннă пирĕн урама,
Чăваша тӳпе пил панă
Ĕмĕр-ĕмĕр пурăнма.

# ТУС-ТĂВАН ПУЛСАССĂН

*Герман ЛЕБЕДЕВ кĕвви*

Тус-тăван пулсассăн пурăнма аван,
Тус-тăван пулсассăн ĕçлеме аван.
Ешĕл çуркунне пек ешерет тĕнче,
Хĕмленет хастарлăх чун-чĕресенче.

Тус-тăван пулсассăн савăнма аван,
Тус-тăван пулсассăн юрлама аван.
Тус-тăван сăмахĕ – çутă ăраскал,
Тус-тăван юррийĕ – иксĕлми вăй-хал.

Ĕç умне тăрсассăн ĕçĕмĕр ăнать,
Юрă пуçласассăн юррăмăр янрать.
Тулăх пирĕн пурнăç, ытарми аван,
Ма тесессĕн хамăр пурте пĕр тăван.

# АХ, ВЁРЕНЕ

*Герман ЛЕБЕДЕВ кӗвви*

Ах, вӗрене, ах, вӗрене,
Эпир лартрӑмӑр иккӗн сана
Виҫӗмҫул ҫуркунне.

Ах, вӗрене, ах, вӗрене,
Эс кӳретӗн илем пахчана,
Саралан кӗр енне...

Ах, вӗрене, ах вӗрене,
Ҫӑлтӑр евӗр ҫулҫу хӗм сапать
Тӑрӑ шыв хӗррине.

Ах, вӗрене, ах вӗрене,
Халь ҫав хӗр инҫетре пурӑнать...
Мускавра вӗренет.

# АН МАН МАНА

*Герман ЛЕБЕДЕВ кӗвви*

Эп сан тесе,
Эс ман тесе
Сӑмахсӑр тунӑ тупана
Ӑнланнӑран
Каймасть асран
Хирти чечек
«Ан ман мана».

Тӑнланӑран,
Ӑнланнӑран
Сана, инҫе каякана,
Юлташ пекех
Пуҫ тайрӗ тек
Сӑпай чечек
«Ан ман мана».

Маттур салтак,
Патвар салтак,
Сыхла пире, упра хӑвна.
Кӗтет пире,
Кӗтет пӗрле
Хитре чечек
«Ан ман мана».

## ХӐМЛАҪӐСЕН ЮРРИ

*Герман ЛЕБЕДЕВ кӗвви*

Хура ҫӗре кӑпкалатса,
Кӑпкалатса, ачашласа
Хӑмла лартса хӑвартӑмӑр,
Ҫуркуннепе шӑвартӑмӑр.

Ылтӑнӑмӑр,
Хӑмламӑр, ай-хай,
Ҫӗклен, кашла,
Ши кай, пи кай!

Шуҫӑмпала пӗрле тӑрса,
Хӗвелпеле пӗрле тухса
Ялпа-йышпа ӗҫлерӗмӗр,
Ырма-канма пӗлмерӗмӗр.

Ӳсет ҫип тӑрӑх явӑнса,
Ҫил вӗрнӗҫемӗн авӑнса,
Пуйса пырать ял-йышӑмӑр,
Хӑват хушать ҫӗршывӑмӑр.

Тӑвансене сума суса,
Ырӑ ҫынна хисеп туса,
Кӑпӑкланать чӑваш сӑри,
Тутанайса пӑхсамӑр-и?

## ВĂЙ ПАТĂР!

*Федор ВАСИЛЬЕВ кĕвви*

Пин-пин тăри юррипеле пĕрле
Шăнкăртатаççĕ тăрă çăлкуççем.
Çурхи хĕрӳ хĕвел тĕррипеле
Уя тухаççĕ тырă ăстисем.

Вăй патăр!
Вăй патăр, тăвансем, сире,
Вăй патăр
Çĕртен-шывран тупра тума,
Вăй патăр
Пучах çумне пучах хушма,
Вăй патăр, тăвансем, сире!

Шуракăш евĕр шурă Шупашкар
Кĕсле кĕввипеле янрать ян-ян.
Пилленĕçем хуламăр пархатар
Чунра патварлăх çĕкленет паян.

Атте-аннен асри хавалĕпе,
Аки-сухин чунри хавалĕпе,
Чăваш çĕршывĕн ырă пилĕпе
Утар, туссемĕр, пурнăç çулĕпе.

# КĔПЕР

*Федор ВАСИЛЬЕВ кĕвви*

Эс килне кĕмерĕн, эп кĕмерĕм,
Алран-ал çӳрерĕмĕр тытса,
Икĕ чунăн курăнми кĕперĕ
Ĕмĕр çирĕп пуласса шанса.

Çав асамлă кĕперпе каçатчĕç
Сарă çу пек çепĕç сăмахсем,
Каçсерен йăл-йăл кулса вылятчĕç
Юрату çуратнă çăлтăрсем.

Инçете эп кайрăм, эсĕ юлтăн,
Пин-пин çухрăм тăсăлчĕ кĕпер.
Чикĕре тăни çинчен хăюллăн
Çырусем çырап кунне икшер.

Эп санран салам кĕтеп пĕр вĕçĕм,
Ялкăшсах çунать чунри кăвайт.
Эс чĕнместĕн нимĕн те, савниçĕм,
Çĕршĕнмен-ши сан енчи сăвай?

## ЛАНТĂШ

*Федор ВАСИЛЬЕВ кӗвви*

Пахчара эп лантăш татрăм
Лăпкă ирхине,
Лантăшпа сана ăсатрăм
Чикӗ хӗррине.

Тен, унта та курăн лантăш
Вăрмана тухсан,
Пӗл, савни, ялти хӗр-тантăш
Пурăнать аван.

Халăхпа хире эп çӳрӗп,
Анăп улăха,
Юрату мана вăй кӳрӗ
Икӗ çуллăха.

Кăйкăр пек вӗçсе эс килӗн
Аякри ялна,
Лантăшпа кӗтсе эп илӗп,
Тусăмçăм, сана.

## ПУРНĂÇ ЮРРИ

*Федор ВАСИЛЬЕВ кĕвви*

Çĕнĕ кун сунать пире
Çĕнĕ пархатар,
Тăвансемĕр, уй-хире
Нимене тухар.

Акине те сухине
Ĕмĕр пуç таяр-и,
Хамăр пурăнăç çулне
Ĕçпеле уçар-и.

Çĕр айне ахах-ĕнче
Хурса хăварар,
Пин пĕрче çити ĕрче,
Тесе ыр сунар.

Пăхмĕ сар хĕвел ялан,
Килĕ ăмăр кун,
Шанăça çухатмасан
Пурпĕр чакмĕ чун.

# ПИНЕРПИ

*Анисим АСЛАМАС кĕвви*

Кашни çыннăн хăйне пўрнĕ ячĕ,
Ашшĕ-амăш хунă ят пулать.
Тусăмсем, чуна пăлхатрĕ-ячĕ,
Вут хыптарчĕ пĕр асамлă ят.

Пинерпи – çурхи шывсен янравĕ,
Пинерпи – инçе чĕнен вăй-хал.
Пинерпи – малашлăх шăнкăравĕ,
Пинерпи – телей те ăраскал.

Таврари хĕрў хĕвел хĕлхемĕ
Пинерпи шевлийĕн çуталать,
Çуркуннен пуççавăрмăш илемĕ
Пинерпи тĕррийĕн туйăнать.

Кўршĕри пикен çунатлă ячĕ
Янăрать ĕçре те вăйăра,
...Кантăксем пĕрне-пĕри сăнаççĕ,
Эп ăна куçран пăхма хăрап.

# АН ТĂК, ЧИЕÇĔМ, ÇЕÇКӲНЕ

*Тимофей ФАНДЕЕВ кĕвви*

Ан тăк, чиеçĕм, çеçкӳне,
Илем кӳреймĕн пахчана.
Ан тăк, пикеçĕм, куççульне,
Тин çавăраймăн каччăна.

Ăна эс ман, ăна эс ман,
Тек ан çӳре çак вырăна.
Шăнкăрчпала çерçи нихçан
Лараяс çук пĕр йăвана.

Текех ан ӳкĕн, сарпикем,
Янраттăр урама куллу.
Урăх çулпа çӳрет иккен
Сан пурнăçри ăраскалу.

## ÇĂЛТĂР КУÇĂМ

***Геннадий МАКСИМОВ кĕвви***

Йăлтăр-йăлтăр хĕвел тухнă чух,
Çамрăк-кĕрĕм хире утнă чух
Мĕншĕн эс ялан
Пăрăнан манран,
Çăлтăр куçăм, хура хурлăхан?

Кĕмĕл уйăх сапсан çутине
Кашни каччă тупать телейне.
Мĕншĕн эс ялан
Пăрăнан манран,
Çăлтăр куçăм, хура хурлăхан?

Эп туятăп сан ăшă чунна,
Эп сисетĕп хаваслă куна...
Мĕншĕн эс ялан
Пăрăнан манран,
Çăлтăр куçăм, хура хурлăхан?

# УШКĂН-УШКĂН

***Геннадий МАКСИМОВ кĕвви***

Ушкăн-ушкăн пĕлĕт айĕнчен
Аван мар-çке уйăх тухмасан,
Шуракăш пек хĕрсем хушшинче
Пит кичем-çке эсĕ пулмасан.

Шăнкăр-шăнкăр юхан тăр шывне
Çутă витре тулли ăсса ил,
Эп тăрсассăн вăйă картине,
Чунăм савни, ăшшăн пăхса ил.

Улма пахчи çеçке çурнă чух
Сивĕ çилĕ мĕншĕн вĕрет-ши,
Савнă тусăм, сана курнă чух
Калас сăмах ăçта çĕтет-ши?

## АНИССА ЮРРИ

***Геннадий МАКСИМОВ кĕвви***

Çилсем вĕрет, ай-хай, çилсем вĕрет,
Сарă хĕре хыпар каласшăн.
Сан хыпарна, ăш çил, пĕлес килет,
Ах, уççăнрах, ах, уççăнрах кала, тархасшăн.

Чĕкеç вĕçет, ай-хай, чĕкеç вĕçет,
Сарă хĕре хыпар каласшăн.
Сан хыпарна, чĕкеç, пĕлес килет,
Ах, уççăнрах, ах, уççăнрах кала, тархасшăн.

Çеçке ӳкет, ай-хай, çеçке ӳкет,
Сарă хĕре хыпар каласшăн.
Сан хыпарна, çеçке, пĕлес килет,
Ах, уççăнрах, ах, уççăнрах кала, тархасшăн.

# ЮРАТНĂРАН

***Геннадий МАКСИМОВ кĕвви***

Мĕн-ма нихçанхинчен сенкеррĕн
Тухать çут шуçăм тухăçран,
Хитрен пăхать сĕвек кĕперĕ?
Юратнăран, юратнăран.

Мĕн-ма курнаççĕ çывăхраххăн
Тулли уй-хирпеле çаран?
Эс савăнса ĕçе тухатăн –
Юратнăран, юратнăран.

Мĕн-ма çăлкуç тĕнче пек аслăн
Янрать тавралăх шăплансан,
Чун тем кĕтет, кĕтет хаваслăн?
Юратнăран, юратнăран.

# АЛЬБИНА ЮРРИ

***Геннадий МАКСИМОВ кĕвви***

Каçхине тухса итлерĕм
Шăнкăр шывăн сассине,
Ман ятпах юрлать пуль терĕм
Шыв янравлă юррине.
Эп тăнларăм – пĕлеймерĕм
Шăнкăр шывăн шухăшне.

Ирхине тухса итлерĕм
Сарă кайăк сассине,
Ман ятпах хывать пуль терĕм
Вăл илемлĕ кĕввине.
Эп тăнларăм, пĕлеймерĕм
Сарă кайăк ĕмĕтне.

Вăйăра чунтан итлерĕм
Сарă каччă сассине,
Ман ятпах калать пуль терĕм
Каччă ăшă сăмахне.
Эп тăнларăм, пĕлеймерĕм
Сарă каччă кăмăлне.

# СЎНЕЙМЕСТ ЧУНРИ ЮРАТУ

***Геннадий МАКСИМОВ кёвви***

Тӳпере вёҫен кӑйкӑр-кайӑкӑм,
Ыввӑнмасть-ҫке сан ҫунату,
Ай, хёр-тантӑшӑм, ырӑ тантӑшӑм,
Сӳнеймест чунри юрату.

Пахчара ӳсен шурӑ лантӑшӑм,
Хисепрен тухмасть сан яту,
Ай, хёр-тантӑшӑм, ырӑ тантӑшӑм,
Сӳнеймест чунри юрату.

Урапи ҫине виҫҫён ларнӑшӑн
Йывӑра илмест хура тур,
Ай, хёр-тантӑшӑм, ырӑ тантӑшӑм,
Сӳнеймест чунри юрату.

## КАМ ВАЛЛИ?

*Геннадий МАКСИМОВ кёвви*

Шыв хёрринче – шурă чул,
Пурçăн çип пек утма çул.
Кам валли-ши, кам валли?
Сан валли те ман валли.

Сенкер тёслĕ тутăрне
Шуçăм çакрĕ ту тăрне.
Кам валли-ши, кам валли?
Сан валли те ман валли.

Юрра ячĕç шăпчăксем,
Çеçке çурчĕç чечексем.
Кам валли-ши, кам валли?
Сан валли те ман валли.

# СПАСОВ ХАЛӐХ АСӖНЧЕ

***Григорий МОКЛАКОВ кӗвви***

Тӳпере ҫӑлтӑрсем ялкӑшаҫҫӗ,
Чӗрере ҫуратаҫҫӗ хӗлхем,
Халӑхра ҫӑлтӑрсем пек пурнаҫҫӗ
Ырӑ ӗҫ тӑвакан паттӑрсем.

Спасов – халӑх комиссарӗ,
Спасов – халӑх асӗнче,
Чӑваш ҫӗрӗн пархатарӗ
Хӗмленет ун ятӗнче.

Ачаран чӑнлӑха вӑл ҫул уҫнӑ,
Ачаран пулнӑ ҫивӗч, патвар.
Тӑван ҫӗр ячӗпе вӑрҫӑ вӑрҫнӑ
Жуковпа, Чуйковпа юнашар.

Яланах тӗрӗс пурнӑҫшӑн ҫуннӑ
Вӗри чунлӑ полковник юлташ,
Йывӑра ҫӗнтерме ырӑ суннӑн
Пирӗнпе вӑл туптать ҫӗн малаш.

Улӑпа асӑнса кам юрламӗ,
Кам мухтамӗ ун сумлӑ ятне?
Спасов ӗҫӗ те Спасов урамӗ
Ӗмӗр упрӗҫ чӑвашлӑх чысне.

# МĂШĂР КĂВАКАРЧĂН

*Геннадий МАРКИЯНОВ кĕвви*

Мăшăр кăвакарчăн лăпкă ирхине
Пырса ларчĕ пирĕн чӳрече çине.
Мăшăр кăвакарчăн тетчĕç-çке ялан,
Мĕншĕн мăшăр мар-ши иксĕмĕр наян?
Мăшăр мар çав иксĕмĕр паян.

Упраймарăм, тусăм, сан юратăвна,
Халь мĕнле пĕрлештерес-ши ик чуна?
Мăшăр кăвакарчăн тетчĕç-çке ялан,
Мĕншĕн мăшăр мар-ши иксĕмĕр паян?
Мăшăр мар çав иксĕмĕр паян.

Ĕмĕрех эп усрăп чĕрере ятна,
Юрату чăнах килет пĕрре кăна.
Мăшăр кăвакарчăн тетчĕç-çке ялан,
Мĕншĕн мăшăр мар-ши иксĕмĕр паян?
Мăшăр мар çав иксĕмĕр паян.

# АВЛАНМАРĂМ ВĂХĂТРА

*Геннадий МАРКИЯНОВ кĕвви*

Авланмарăм çирĕмре,
Хĕр суйларăм Çĕрпӳре,
Тупаймарăм хитрине,
Ик çӳç хĕрри кăтрине.

Авланмарăм вăтăрта,
Хĕр суйларăм Вăрнарта,
Тупаймарăм хитрине,
Сар чечек пек саррине.

Авланмарăм хĕрĕхре,
Хĕр суйларăм Йĕпреçре,
Тупаймарăм хитрине,
Шăнкăр шыв пек саслине.

Авланасчĕ аллăра,
Пит хытман-ха ал-ура,
Эх, хитре-çке хĕрĕсем,
Мана савĕç-ши вĕсем?

# МĔНЛЕ ХĂЙСА КАЛАМ-ШИ?

***Геннадий МАРКИЯНОВ кĕвви***

Çĕмĕрт çеçкине эп татрăм,
Ах, мĕнпе çыхайăп-ши,
Çамрăках качча юратрăм,
Ах, мĕнле калайăп-ши?

Çуркунне ĕшне илемĕ
Йыхăрать-çке уçăлма,
Кŭршĕ каччăн чун хĕлхемĕ
Çавăрать-çке пуçăма.

Çивĕт  хăйăвне салтам та
Çĕмĕрт çеçкине çыхам,
Ăшшăн-ăшшăн йăл кулам та
Куçăмпа йăлтах калам.

# ӐНЛАНСАМЧЧӖ МАНӐН ЧӖРЕНЕ

*Геннадий МАРКИЯНОВ кӗвви*

Улӑха тухсамччӗ, тусӑм, сарпикем,
Пин те пин чечек сапать хитре хӗлхем.
Вуласамччӗ пин чечек кӗнекине,
Ӑнлансамччӗ манӑн чӗрене.

Вӑрмана пырсамччӗ, тусӑм, сарпикем,
Чаплӑ юрӑ шӑратаҫҫӗ кайӑксем.
Итлесемччӗ ҫепӗҫ шӑпчӑк юррине,
Ӑнлансамччӗ манӑн чӗрене.

Шыв хӗрне ансамччӗ, тусӑм, сарпикем,
Тыткӑна илет  чуна ҫурхи илем.
Тӑнласамччӗ шӑнкӑр шывӑн сассине,
Ӑнлансамччӗ манӑн чӗрене.

# ТӐВАНӐМ, ТӐВАНӐМ

*Гаврил МИТРОФАНОВ кӗвви*

Тӑванӑм, тӑванӑм,
Хӗвел анать,
Антӑр-и хӗвелӗ,
Уйӑх тухать.

Тӑванӑм, тӑванӑм,
Уйӑх шӑвать,
Йӑлтӑрти ҫӑлтӑра
Сӑмах хушать.

Тӑванӑм, тӑванӑм,
Ҫуммӑн ларар,
Савӑнса пӗр ҫавра
Юрӑ юрлар.

Тӑванӑм, тӑванӑм,
Ӑсатса яр,
Ҫут ҫӑлтӑр ҫутипе
Киле каяр.

Тӑванӑм, тӑванӑм,
Тавах сана,
Нихӑҫан манас ҫук
Ыр кӑмӑлна.

# ТĂВАН ÇĔРШЫВĂМ – ЧĂВАШ ЕН

***Иван АРШИНОВ кĕвви***

Хастар утатăн канăçа пĕлмесĕр,
Ятна-сумна çуллен çĕклен.
Хăват çумне хăват хушатăн эсĕ,
Тăван çĕршывăм – Чăваш ен.

Алран кайми аки-сухи кĕтесĕ
Ĕçпе туптаннă ĕмĕртен.
Чун-чĕрӳпе патвар та ырă эсĕ,
Тăван çĕршывăм – Чăваш ен.

Пуçа тайса аттем тесе чĕнес-и,
Аннем теес-и чĕререн?
Пире чипер кун-çул сунатăн эсĕ,
Тăван çĕршывăм – Чăваш ен.

## ТАВ ЮРРИ

*Иван АРШИНОВ кӗвви*

Саламлать ҫут тӗнчене
Сывлӑм сыпнӑ ир,
Пархатарлӑ ӗҫчене
Пуҫ таять уй-хир.
Уйӑм-хирӗм, тав сана,
Тырпулушӑн тав,
Тырӑ-пул паракана
Ӗмӗрех мухтав.

Сарӑ кайӑк кӗввине
Янратать ян-ян,
Пархатарлӑ ӗҫчене
Пуҫ таять вӑрман.
Сӗм вӑрманӑм, тав сана,
Пурлӑхушӑн тав,
Пурлӑхне хушакана
Ӗмӗрех мухтав.

Ик ҫыран ытамӗнче
Ҫуталать Ҫавал,
Пархатарлӑ ӗҫчене
Парнелет хавал,
Ҫӗрӗм-шывӑм, тав сана,
Ырлӑхушӑн тав,
Ырлӑхне упракана
Ӗмӗрех мухтав!

# ЁМĔР САККИ САРЛАКА

*Иван АРШИНОВ кĕвви*

Ырри ыртарнăччĕ сана,
Чипер сăнра телей шыракана.
Каллех шаккатăн манăн алăка,
Каллех шаккатăн манăн алăка, –
Ёмĕр сакки сарлака.

Ёлĕкхи пек куçу кулмасть...
Памарĕç-им унта пылпа кулач?
Çухатрăн-им самантлăх ырлăха,
Çухатрăн-им самантлăх ырлăха?
Ёмĕр сакки сарлака.

Йăву та, ачусем те çук,
Хăв пепкӳсемшĕн пултăн эс куккук.
Нихçан иртми, теettĕн яшлăха,
Нихçан иртми, теettĕн яшлăха...
Ёмĕр сакки сарлака.

Çурхи шыв пек юхать кун-çул,
Çавăрăнса килмешкĕн çук ун çул.
Каллех шаккатăн манăн алăка,
Каллех шаккатăн манăн алăка...
Ёмĕр сакки сарлака.

# ПУРНĂÇĂМ – КУНÇУЛĂМ

*Иван АРШИНОВ кĕвви*

Ах, шухă ачалăх, ăçта эсĕ тартăн,
Хавас вăййасем выляса?
Хавас вăйăпа савăнтартăн пулсан та
Кичемĕ пĕрлех пычĕ сан.

Ах, çамрăклăх-яшлăх, ăçта-ши çухалтăн,
Телейлĕн çиçсе, йăл кулса?
Телей асамне астивтертĕн пулсан та
Усалĕ çумрах пычĕ сан.

Ах, пурнăçăм-пурнăç, иртетĕн, васкатăн:
Утту кунран-кун хăвăртрах.
Пуçа шухăшпа шурататăн пулсан та
Ырри сан çавах ытларах.

# ЧАВСА ÇЫВĂХ – ÇЫРТМА ÇУК

*Иван АРШИНОВ кĕвви*

Юратсах сана, чĕкеçĕм,
Чĕнтĕм эп атте килне.
Йăл кулса кăна ирттертĕм,
Хĕр чух хĕрĕх тенине.

Çын сăмахĕ – хирĕçтермĕш,
Теттĕм кĕвĕç шухăша,
Пурпĕрех-çке хĕрĕх пĕрмĕш
Кĕчĕ иксĕмĕр хушша.

Ĕмĕрех чĕкеç пулассăн
Чĕвĕлтетрĕн çамрăк чух.
Куккукла халь авăтатăн...
Чавса çывăх – çыртма çук.

# САЛАМ, ШУПАШКАР

*Иван АРШИНОВ кĕвви*

Шупашкар урамĕнче
Ретĕн-ретĕн çăкасар.
Çăкасар ытамĕнче
Мĕншĕн юрă юрлас мар?

Эпир килнĕ, килнĕ анатран, туран,
Çитнĕ, çитнĕ çывăхран та аякран.
Юрă-кĕвĕ – пирĕн пĕрлĕх, пирĕн пархатар,
Йышăнсам ăна, хĕвеллĕ Шупашкар.

Шурă-шурă çурчĕсен
Йăл куласçĕ куçĕсем,
Ма тесессĕн çыннисем –
Пурте хамăр тăвансем.

Алран-ал тытса юрлар
Акатуй юррисене,
Ян-янратăр Шупашкар,
Çĕклесе Чăваш ятне.

# ПИРĔН САВНĂ ЯЛĂМĂР

*Вера НАТАЛИНĂПА*
*Иван АРШИНОВ кĕвви*

Юр юрлаççĕ йăмрасем –
Ырă кун сунаççĕ.
Пикесем пек хурăнсем
Ташлама тухаççĕ.

Сад пахчи пек капăр тумлă
Пирĕн савнă ялăмăр.
Çил килет те хумлăн-хумлăн
Çĕкленет вăй-халăмăр.

Кĕмĕл карлăклă кĕпер –
Ик çыран тăванĕ,
Шыв кĕвви, ай-хай, чипер,
Çав кĕвве кам манĕ?

Куç тулли ентешĕмсем,
Хурăнташлă халăх,
Пултăр чĕрери хĕлхем
Ĕмĕр асăнмалăх.

## КĔТСЕ ИЛĔП ТУСĂМА

*Иван АРШИНОВ илемлетнĕ*

Ешĕл улăх сарлака,
Хĕрлĕ чечек тат та ил.
Хам юратнă салтака
Асилетĕп каç та ир.

Хĕвелтухăç чиккинче
Вăл сыхлать Раççей çĕрне.
Иккĕн ларнă сак çинче
Эп вулап ун çырăвне.

Ăшă çумăр çунă чух
Илĕртет çут асамат.
Иртсе кайĕ икĕ çул –
Кĕтсе илĕп тусăма.

# ЫЛТĂН МАР-ШИ ЭС, АННЕ?

*Иван АРШИНОВ кĕвви*

Ылтăн мар-ши эс, анне?
Кĕмĕл мар-ши эс, анне?
Ылтăн пек, ай, хаклă-çке,
Кĕмĕл пек, ай, сумлă-çке.
Ылтăнран та пахарах,
Кĕмĕлрен те сумлăрах.

Çăлтăр мар-ши эс, анне?
Уйăх мар-ши эс, анне?
Çăлтăр пек хĕлхемлĕ-çке,
Уйăх пек илемлĕ-çке.
Çăлтăртан хĕлхемлĕрех,
Уйăхран илемлĕрех.

Шăпчăк мар-ши эс, анне?
Е саркайăк эс, анне?
Çут хĕвел, чечек, ахах –
Ырлама çитмест сăмах.
Эс нимрен те лайăхрах,
Пуринчен те хаклăрах.

## ТУСЛĂХ ЮРРИ

*Вера НАТАЛИНĂПА*
*Иван АРШИНОВ кĕвви*

Атăл шывĕ сарлака
Çул хывать авкаланса.
Тăванла пур халăха
Ыталать хавхаланса.

Калаçать вăл пирĕнпе
Вырăсла та чăвашла,
Калаçать вăл пирĕнпе
Тутарла та çармăсла.

Хум çапать мăн çырана,
Шав шăваççĕ вăхăтсем.
Улшăнсан та самана
Улшăнмаççĕ шухăшсем.

Раççейпе эпир ялан
Утăмлатпăр алран-ал,
Хамăр туслă пулнăран
Хушăнса пырать вăй-хал.

# ПЕХИЛ

*Иван АРШИНОВ кĕвви*

Савнă ачасемĕр,
Энĕш юхнă евĕр
Çамрăк вăхăт васкаса иртет.
Пĕчĕк çеç çӳреттĕр,
Халĕ ак сире те
Пурнăç çулĕ ирĕке чĕнет.

Ваттине пуç тайăр,
Вĕттине ал парăр,
Çывăх пултăр хамăр тус-тăван.
Ырăпа ан ырăр,
Йывăртан ан хăрăр, –
Ĕç çынна нихçан та хур туман.

Пĕр-пĕрне, атьсемĕр,
Каçарма пĕлсемĕр,
Каçарусăр юрату та çук.
Çурхи йывăç евĕр
Туратланăр ĕмĕр,
Пирĕнтен ан тухтăр çеç куккук.

## АН КАЙ, ТĂВАН

*Иван АРШИНОВ кĕвви*

Ан кай, тăван,
Ан кай, тăван,
Татах пуплес килет.
Кайсан, хăçан итлемелле
Сар çу пек сăмахна,
Хăçан тепре савăнтарас чуна?

Ан кай, тăван,
Ан кай, тăван,
Татах юрлас килет.
Кайсан, хăçан итлемелле
Шăнкрав пек сассуна,
Хăçан тепре çĕклентерес чуна?

Ан кай, тăван,
Ан кай, тăван,
Татах ташлас килет.
Кайсан, хăçан вĕренмелле
Сан çăмăл ташшуна?
Хăçан тепре уçăлтарас чуна?

Ан кай, тăван,
Ан кай, тăван,
Пĕрле пулас килет.
Кайсан, хăçан, ай, кĕтмелле
Кĕрекене сана?
Хăçан тепре савăнтарас чуна?

## ИКĔ ВИТРЕ

***Иван АРШИНОВ кĕвви***

Урампа иртсе пыратăн
Эсĕ шыв çĕклемĕпе.
Хĕвелпи пек туйăнатăн
Çурхи кун илемĕпе.

Сарпикем, кала тархасшăн,
Сисетех, сисетех сан чун-чĕрӳ,
Пĕр витрӳ хĕвел пулсассăн, } 2 хут
Мĕн-ши иккĕмĕш витрӳ?

Акăш евĕр ярăнатăн,
Пур тавра ăмсанмалла.
Паллашасчĕ, ик çунатăм,
Манăн кĕçĕр санпала.

Сарпикем, кала тархасшăн,
Сисетех, сисетех сан чун-чĕрӳ,
Пĕр витрӳ телей пулсассăн, } 2 хут
Мĕн-ши иккĕмĕш витрӳ?

Сахал мар-тăр лайăх каччă
Сирĕн ял урамĕнче,
Пурпĕрех санпа ларасчĕ
Шурă çĕмĕрт айĕнче.

Сарпикем, итле тархасшăн,
Пĕлтĕр ырă, пĕлтĕр ырă чун-чĕрӳ,
Пĕр витрӳ эс ху пулсассăн, } 2 хут
Эпĕ – иккĕмĕш витрӳ.

## ЯЛӖ ЯТНЕ ЯРАҪҪӖ

*Иван АРШИНОВ кӗвви*

Кавраҫкасси теесҫӗ,
Кавраҫкасси теесҫӗ.
Кавраҫкасси ачисем
Кавраҫ тӗлне пӗлмеҫҫӗ.
Кавраҫ хӑшӗ тесессӗн
Катӑркаса тӗллеҫҫӗ.

Пилешкасси теесҫӗ,
Пилешкасси теесҫӗ.
Пилешкасси хӗрӗсем
Пилеш тӗлне пӗлмеҫҫӗ.
Пилеш хӑшӗ тесессӗн
Палан ҫине тӗллеҫҫӗ.

Ҫирӗккасси теесҫӗ,
Ҫирӗккасси теесҫӗ.
Ҫирӗккасси ҫыннисем
Ҫирӗк тӗлне пӗлмеҫҫӗ.
Ҫирӗк хӑшӗ тесессӗн
Ҫӳҫе ҫине тӗллеҫҫӗ.

Темиҫе кас ҫак ялта:
Пилешкасси, Ҫирӗккасси,
Кавраҫкасси, Вӑрманкасси –
Курӑнмасть пӗр йывӑҫ та.
Курӑнмасть пӗр йывӑҫ та
Пурпӗр йывӑҫ лартмаҫҫӗ,
Ялӗ ятне яраҫҫӗ.

## ÇУРХИ КАÇ ВАЛЬСĔ

***Борис НИКИТИН кĕвви***

Хăш вăхăтра шăпланчĕ вăйă,
Ăçта хаваслă такмаксем?
Çут çăлтăрсем саланнă майăн
Пĕрлешрĕç пирĕн сукмаксем.

*Хушса юрламалли:*

Сан аллунта – ман алă,
Пĕр пек тапать ик чĕре.
Пĕрле утма яланлăх,
Çӳл тӳпе, пиллесемччĕ пире.

Сăмахсăрах ăнланнă евĕр
Сад пахчинчи саркайăксем,
Мĕнле тĕл пулчĕç систермесĕр
Çак ырă каç шăпамăрсем?

Пăшăлтататъ ем-ешĕл çулçă,
Çăлкуç çĕн кĕвĕ кĕвĕлет.
Умри урам хапхи те уçă,
Тухар-и хирĕç хĕвеле?

# ТЕКЕРЛĔК

*Николай КАРЛИН кĕвви*

Мĕншĕн, мĕншĕн йĕретĕн, текерлĕк,
Каçсерен юханшыв хĕрринче?
Кун-çулу-им сан питĕ синкерлĕ
Е чĕппӳ-им ют çын аллинче?

Улăхра эс вĕçен каллĕ-маллĕ,
Çаврăнатăн çаран çийĕпе.
Пур пĕрех-çке шăпа ăраскалĕ
Пытанать шурăмпуç çилĕ пек.

Ах, текерлĕкĕм, айăпсăр кайăк,
Сассупа ан амант чĕрене.
Манăн хамăн та халĕ çул тайлăк,
Эп çухатрăм телей йĕррине.

Яланах йăлтăрти çутă суннăн
Илĕртетчĕ пуласлăх пире.
Халĕ çук ман çумра савнă çыннăм,
Пĕчченех ĕмĕрлеп ĕмĕре.

# ПОЧТА ХĔРĔ

*Николай **КАРЛИН** кĕвви*

Йăлтăр-йăлтăр кĕмĕл çĕрĕ
Кĕмĕл çĕрĕ, çут тевет.
Сенкер куçлă кӳршĕ хĕрĕ
Мерченрен те иртттерет.
Ай-хаях, кӳршĕ хĕрĕ,
Ай-хаях, почта хĕрĕ,
Сенкер куçлă кӳршĕ хĕрĕ
Мерченрен те иртттерет.

Почта хĕрĕн çулĕ-йĕрĕ
Маншăн паллă пĕтĕмпех,
Кӳршĕ хĕрĕ тунă тĕрĕ
Илĕртет урамĕпех.
Ай-хаях, кӳршĕ хĕрĕ,
Ай-хаях, почта хĕрĕ,
Кӳршĕ хĕрĕ тунă тĕрĕ
Илĕртет урамĕпех.

Виç хаçат илсе тăратăп,
Çырăнатăп халь тепре,
Çав хĕре кăна куратăп
Каçсерен эп тĕлĕкре.
Ай-хаях, кӳршĕ хĕрĕ,
Ай-хаях, почта хĕрĕ,
Çав хĕре кăна куратăп
Каçсерен эп тĕлĕкре.

Ма ялан кулса пăхать-ши
Кӳршĕ хĕрĕ ман çине?
Ман ятпа салам тухмасть-ши
Ун тулли уртмахĕнчен?
Ай-хаях, кӳршĕ хĕрĕ,
Ай-хаях, почта хĕрĕ,
Ман ятпа салам тухмасть-ши
Ун тулли уртмахĕнчен?

# АН КУЛЯН, ТĂВАН

*Николай КАРЛИН кĕвви*

Улмаях çеçки, шурăях çеçки
Вĕл те вĕл вĕçет çĕр çине.
Шур çеçке ӳкни, çуркунне иртни
Тунсăхпа витет чĕрене.

Ан кулян, тăван, ан кулян, тăван,
Çут тĕнче пĕлет хăй ĕçне.
Пахчари улми çулçă палăрми
Çимĕçне кӳрет кĕркунне.

Сарăях пикем, ытарми пикем,
Туйăнта янрать хĕр йĕрри.
Иртсе кайрĕ-им, иртсе кайрĕ-им,
Иртсе кайрĕ-им хĕр ĕмри?

Ан кулян, тăван, ан кулян, тăван,
Çут тĕнче пĕлет хăй ĕçне.
Ачусем ӳссен, кăйкăр пек вĕçсен
Çĕнĕрен килет çуркунне.

# ĂÇТА-ШИ ХАЛЬ ÇАВ ÇУРКУННЕ?

***Николай КАРЛИН кĕвви***

Таса çăлкуçсем шăнкăр-шăнкăр юхатчĕç,
Васкатчĕç мăн шыв ытамне.
Ачаш куçусем ăшшăн-ăшшăн пăхатчĕç,
Ăçта-ши халь çав çуркунне?

Çĕн кĕвĕ калатчĕ телейлĕ саркайăк
Туйса ик савнин пĕр чунне.
Пире çупăрлатчĕ хитре ăш вăркавĕ...
Ăçта-ши халь çав çуркунне?

Йăл-йăл тӳперен сăрхăнан кĕмĕл çутă
Хушатчĕ çунат чĕрене.
Çеçкен çурăлатчĕ пирти юрату та...
Ăçта-ши халь çав çуркунне?

Вĕçет, çаврăнать самана çил-тăманĕ,
Виçет ĕмĕр хăй виçине.
Мĕн-ма эп те, эс те пĕлместпĕр, тăванăм,
Ăçта-ши халь çав çуркунне?

# ХЁРТАНТĂШСЕМ

*Николай КАРЛИН кĕвви*

Çил уççинчи шур чатăр евĕр
Курнаççĕ шурă çĕмĕртсем.
Ĕмĕтĕрпе ăçта вĕçетĕр,
Çуркуннехи хĕртантăшсем,
Хĕртантăшсем?

Чăн тӳпери пин çăлтăр тейĕр,
Лараççĕ капăр чечексем.
Кăмăлăрпа ăçта вĕçетĕр,
Çу кунĕнчи хĕртантăшсем,
Хĕртантăшсем?

Ан кайăрах тесе пӳлеймĕр,
Çавах каяççĕ акăшсем.
Шухăшăрпа ăçта вĕçетĕр,
Кĕркуннехи хĕртантăшсем,
Хĕртантăшсем?

Юр пĕрчине илсе юр витĕр
Раштав пусқăшăль çыхнăçем,
Чунăрпала ăçта вĕçетĕр,
Хĕл кунĕнчи хĕртантăшсем,
Хĕртантăшсем?

# АННЕ

***Николай КАРЛИН кĕвви***

Сана хĕвел чĕреллĕ тетчĕç.
Хĕвел пек лартăн эс анса.
Хĕвел пек чунупа, аннеçĕм,
Эс тухрăн сар хĕвел пулса.

Сана çăка çеçки пек тетчĕç.
Пыл сăмахушăн тав туса.
Килти çăка пекех, аннеçĕм,
Кĕтен пире эс пуç тайса.

Сана çурхи саркайăк тетчĕç,
Юрру юхатчĕ çаврăнса.
Тĕнче ытамĕнче, аннеçĕм,
Эс юлтăн ĕмĕрлĕх пулса.

# ХУРĂНЛĂХРИ ПИЛЕШ

*Николай КАРЛИН кĕвви*

Мăшăр хурăн çумĕнчи пилеш
Çырлине тăкать шур юр çине.
Аякри савни, халь ан ÿпкелеш,
Çавăраймăн иртнĕ кунсене.

Çеçкери пилеш тухсан умма
Ăнсăртран тĕл пулчĕç сукмаксем.
Мĕншĕн-ши ун чух çамрăк пуçăма
Тыткăнларĕç çепĕç сăмахсем?

Юрату сарсассăн çунатне
Татса кайрĕç эп утас çула:
Шупашкар пики ман савни ятне
Ăшшăнрах каларĕ пулмалла...

Хурăнсен ытамĕнчи пилеш
Килес çул та ларĕ çеçкене.
Пирĕн юрату кÿрĕ-ши эреш
Çĕнĕрен вăраннă чунсене?

## ЧĂВАШ ТĔРРИ

*Николай КАРЛИН кĕвви*

Тĕррине эрешлет çутă шуçăм,
Сар хĕвел ыталать таврана.
Тĕрĕсен çырăвне, савнă тусăм,
Вуласа кăтартсамччĕ мана.

Чăваш хĕрĕ – ылтăн çĕрĕ,
Ылтăн çĕрĕ – асамат,
Чăваш хĕрĕ тунă тĕрĕ
Чĕрене хушать çунат.

Шăпчăксем çепĕç юрă хываççĕ,
Пин çăлкуç шăрататать çав юрра.
Çеçкери çуркунне вăй-хăвачĕн
Юрату хĕмленет-çке чунра.

Пир çинче – ырă кăмăл ахахĕ,
Çўл тўпе кўрекен пархатар,
Чун савни, пирĕн пурнăç сукмакĕ
Тĕрĕри пек выртать юнашар.

# ÇИНÇЕЕХ ТЕ КĔПЕР

***Николай КАРЛИН кĕвви***

И, шыв юхать, шыв юхать
Икĕ çыран хушшипе.
Те юрлать, те калаçать
Хăйĕн кĕмĕл сассипе.

Çинçеех те кĕпер, кĕçĕн кĕпер,
Ытлашши ан аван, ан вылян.
Ма тесессĕн, кĕпер, черчен кĕпер,
Сарă хĕр каçасшăн санпалан.

Çичĕ çиçĕм хушшинче
Аслати лăпланаймасть,
Ах, мĕскершĕн леш енче
Сарă ача курăнмасть?

Леш енне каçас пулсан
Вăйлă çумăр килмĕ-ши,
Ейӳ тулли шыв ансан
Каçă юхса каймĕ-ши?

## ВĂЙĂРА

*Николай ЭРИВАНОВ кĕвви*

И, çил вĕрет, çил вĕрет, çил вĕрет,
Хурăн тăрри хумханать, хумханать.
Çил ачийĕ пирĕн çамрăк ĕмĕре
Тĕнче тăрăх сапалать, сапалать.

Урам вăрăм – мĕн усси, мĕн усси
Симĕс курăк шăтмасан, шăтмасан.
Савни тени мĕн усси, мĕн усси,
Ялан пĕрле пулмасан, пулмасан.

Хĕрĕх чалăш хĕрлĕ ту, хĕрлĕ ту
Мĕн-ма ытла чăнкă-ши, чăнкă-ши,
Чун çунтармăш юрату, юрату
Мĕн-ма йывăр килчĕ-ши, килчĕ-ши?

Çут кӳлĕри шуракăш, шуракăш
Мĕншĕн пĕччен ишет-ши, ишет-ши,
Хамăр касри хĕр-тантăш, хĕр-тантăш
Мĕншĕн пĕччен çӳрет-ши, çӳрет-ши?

Ват юманне каснăçем, каснăçем
Тураттине иртĕр-ха, иртĕр-ха,
Сар чечек пек сар хĕрсем, сар хĕрсем,
Вăй картине кĕртĕр-ха, кĕртĕр-ха.

# МĂШĂР ÇĂЛТĂР

*Николай ЭРИВАНОВ кĕвви*

Сар хĕвел ансан,
Каç чаршав карсан,
Шур çеçкеллĕ пахча витĕр
Шăпчăк сас парсан –

Тусăм, пире
Çӳллĕ тӳпере
Мăшăр çăлтăр саламлать,
Кĕмĕлĕпе ыталать,
Ылтăнĕпе илĕртет те
Ĕмĕр пĕрле пулăр, тет.

Юрă юрласан,
Ташă ташласан
Çутă уйăх пек çиçеççĕ
Туйăмсем тасан.

Шухăш çунатне,
Ĕмĕт хăватне
Чĕрĕ кăшăл пек çыхар-и
Юрату ятне?

# АЙ, ВЫЛЯР-И, ВЫЛЯР-И

*Николай ЭРИВАНОВ кĕвви*

Ай, выляр-и, выляр-и,
Çил ачи пек выляр-и,
Çил ачи пек выляр-и, –
Мăшăр çунат хушар-и.

*Хушса юрламалли:*

Тух, тусăм, ташлама та,
Тух, тусăм, ташлама,
Вăй выляма,
Вăй выляма-юрлама.

Ай, юрлар-и, юрлар-и,
Шăкăлчи пек юрлар-и,
Шăкăлчи пек юрлар-и, –
Шăкăл-шăкăл пурнар-и.

Ай, ташлар-и, ташлар-и,
Шуракăш пек ташлар-и,
Шуракăш пек ташлар-и, –
Шурăмпуç пек курнар-и.

Ай, калар-и, калар-и,
Çĕнĕ такмак калар-и,
Çĕнĕ такмак калар-и, –
Çĕнĕ вăй-хал тупар-и.

# САН ЯТУПА

*Николай ЭРИВАНОВ кĕвви*

Сарă кайăк, сарă кайăк,
Ма пĕрмай юрласшăн тăрăшан,
Кам патне ял тăрăх кайĕ
Сан сассу, хĕвел анса ларсан?
Юрăпа-çке, юрăпа,
Тусăм, эс тăван тупа,
Хавхаланнă кăмăлпа
Эп юрлап сан ятупа.

Ылтăн сывлăм, кĕмĕл сывлăм,
Ма ялан ӳкетĕн çĕр çине,
Кам умне хумашкăн сулă
Пикенетĕн эсĕ ир енне?
Кĕмĕлпе те ылтăнпа,
Тусăм, эс тăван тупа.
Хавхаланнă кăмăлпа
Эп пурнап сан ятупа.

Асаматăм, асаматăм,
Йĕпенмесĕр çумăрпа
Кам пӳне эс ыталатăн
Çичĕ тĕслĕ капăр хăюпа?
Хĕвелпе те çăлтăрпа,
Тусăм, эп тăвап тупа,
Хавхаланнă кăмăлпа
Эп килеп сан ятупа.

# ПИРЁН ЮРАТУ

*Николай ЭРИВАНОВ кĕвви*

Ай-хай, теççĕ, чаплă, теççĕ,
Улмуççи, сан туратту.
Çеçкерен те хитререх-мĕн
Чĕрери чăн юрату.

Ай-хай, теççĕ, вĕри, теççĕ
Çиçĕм, санăн хăвату.
Çиçĕмрен те вĕрирех-мĕн,
Тусăм, пирĕн юрату.

Ай-хай, теççĕ, вăйлă, теççĕ,
Кăйкăр, санăн çунатту,
Çунатран та вăйлăрах-мĕн
Пархатарлă юрату.

Ай-хай, теççĕ, ăшă, теççĕ,
Сар хĕвелĕм, сан çуту,
Хĕвелрен те ăшăрах-мĕн
Турă панă юрату.

Юрату! Сана илеймĕн
Кĕмĕлле е ылтăнла,
Сан ятна кашнин мĕн ĕмĕр
Чĕрере упрамалла.

## ТИЛ ЮРТАТЬ

***Анатолий НИКИТИН кĕвви***

Тил юртать, тил юртать,
Çырма тăрăх тил юртать.
Çырма тăрăх тил юртать те,
Шур юр çинче йĕр юлать.

Чун туртать, чун туртать,
Сирĕн пата чун туртать.
Сирĕн пата чун туртать те,
Кĕрсе тухсан мĕн пулать?

Тăвансем, тăвансем,
Ытарайми ыр çынсем,
Кăмăлăрсем кĕмĕл пек те
Сăмахăрсем ылтăн пек.

Тăвансем, тăвансем,
Асран кайми ыр çынсем,
Тĕл пулнă чух савнар-и те
Ĕмĕр пĕрле пурнар-и?

## КУРМА КИЛСЕН

*Анатолий НИКИТИН кӗвви*

Пахчасем шап-шурă çурăлатчĕç,
Пĕтĕм ял ларатчĕ чечекре.
Çавăн чух эс, çăлтăр çакнă каччă,
Çулăм чĕртрĕн чĕрере.

Çурхи çил вĕретчĕ уççăн-уççăн,
Юрăсем юхатчĕç айлăма,
Ешĕл çулçă пек салтак çи-пуçĕ
Хускататчĕ чунăма.

Акăш пек ачашшăн эс каларăн:
– Савнă тусăм, санăн пулăп эп.
Ик эрне иртсен вĕçсе те кайрăн
Эс хур кайăк çулĕпе.

Халь ялан кĕтетĕп эп, салтакăм,
Çĕмĕртсем тепре çурăласса.
Эс сыхлан таса тӳпе кăваккăн
Ёмĕр тăтăр çуталса.

# АЯКРИ ТАНТĂША

*Анатолий **НИКИТИН** кĕвви*

Аякка йыхăрать пурнăç çулĕ,
Аякка вĕçтерет ик çунат.
Умăнта сарă кун ăшшăн кулĕ,
Пурпĕр кил туйăмне ан çухат.

Çĕнтерсе çичĕ ту урлă каçăн,
Çитĕн çич юханшыв леш енне.
Пурпĕрех ан мансам эс, тархасшăн,
Хамăр ялăн лаштра йăмрине.

Уялла тинкерет куç илмесĕр
Çĕн хапхаллă хитре униче.
Лăпланаймĕ аннӳ эс килмесĕр
Кăн-кăвак чӳрече умĕнче.

Ĕçӳпе пулăн ятлă та сумлă,
Аслă халăх кӳрен чыспалан.
Пĕчĕк шыв хĕрринчи ешĕл тумлă
Тăван ял урамне эс ан ман.

## ЮРАТУÇӐМ, ЮРАТУ

***Анатолий НИКИТИН кӗвви***

Чупса антӑм ирхине улӑх варрине,
Тирес терӗм çип çине сывлӑм шӑрçине.
Тиреймерӗм çип çине сывлӑм шӑрçине,
Çакаймарӑм каçхине шур кӗпе çине.

Ах, савниçӗм, савниçӗм,
Тух-ха урама,
Ах, савниçӗм, савниçӗм,
Лар-ха ман çума.

Чупса тухрӑм урама юрӑ юрлама,
Чӗрери шухӑшӑма вӑрттӑн калама.
Хӑяймарӑм пуçлама çепӗç юррӑма,
Калаймарӑм тусӑма хам сӑмахӑма.

Йӑлтӑркка ахах шӑрçи, сывлӑмах шӑрçи
Шурӑмпуç хӑпарнӑ чух мӗншӗн сивӗ-ши,
Юратуçӑм, юрату, иçӗм йывӑççи,
Эс çеçке кӑларнӑ чух мӗншӗн йывӑр-ши?

# АСА ИЛНИ

*Анатолий* ***НИКИТИН*** *кěвви*

Шăнкрав курăкě суйлаттăн
Манпала эс çуркунне.
Шăпчăк кайăк пек юрлаттăн
Янратса уничене.

Сар хěвел пекех лăпкатчě
Çепěç сасă чěрене.
Çамрăк пуçăм çаврăнатчě
Эс пăхсассăн ман çине.

Майěпен уй-хир пушанчě,
Халь чечек сěнмест çаран.
Чунăмра ешернě шанчăк
Сÿнчě эс çухалнăран.

Çур килеççě, кěр каяççě
Кайăксем кунтан ялан.
Вěçен кайăк евěр каччă
Пултăн мар-и эсě ман?

## ПИРĔН АННЕ

*Анатолий НИКИТИН кĕвви*

Анне, эсĕ ир тăран,
Ир тăран та ĕç тытан,
Анне, эсĕ ир тăран,
Ир тăран та ĕç тытан.
Пахчара йăран çумлан,
Апатне лартса яран,
Васкаса ĕне сăван,
Кĕтӳне те хăвалан.

Ытарми хитре анне,
Ывăнми ĕçчен анне,
Ытарми хитре анне,
Ывăнми ĕçчен анне,
Çĕнĕ кунăн ыйхине
Эс сиретĕн пулмалла,
Шуçăмне те хĕвелне
Эс чĕнетĕн пулмалла.

# МАЛТАНХИ ЮРАТĂВĂМ

***Юрий КУДАКОВ кĕвви***

Малтанхи юратăвăм,
Чĕрери ыратăвăм,
Çутăлсаттăн шуçăм пек пурнăç умĕнче.
Чечексен ачашлăхĕ,
Яш кун-çул малашлăхĕ
Илĕртсе тăратчĕç-çке тусăм çумĕнче.

Малтанхи юратăвăм,
Чĕрери ыратăвăм,
Ма пурăнаймарăн-ши çамрăк чунăмра?
Çуркунне хаваслăхĕ,
Кăвак куç кăваклăхĕ
Мĕншĕн çунса кайрĕ-ши тĕттĕм çулăмра?

Малтанхи юратăвăм,
Чĕрери ыратăвăм,
Çаврăнса килеймĕç тек ытарми кунсем.
Малтанхи юратăвăм,
Ытарми çухатăвăм,
Аякри çут çăлтăр пек ялкăшан хĕлхем.

## ЧӐВАШ ÇЁРНЕ КИЛСЕ КУРСАМӐР

***Юрий КУДАКОВ кӗвви***

Чӑваш çӗрне килсе курсамӑр,
Туссем, чечеклӗ çуркунне:
Чӑн-чӑн телей ӗшни пек капӑр
Тухса вӑл ларӗ куç умне.

Чӑваш çӗрне килсе курсамӑр
Çулла, хӗвеллӗ кунсенче:
Юлташ пек кӑмӑллӑ та сапӑр
Ыталӗ ытарми тӗнче.

Чӑваш çӗрне килсе курсамӑр,
Туссемӗр, тулӑх кӗркунне:
Мӗскер акса ӳстернӗ хамӑр –
Йӑлтах сӗнет уй-хир анне.

Чӑваш çӗрне килсе курсамӑр
Шап-шурӑ хӗл уявӗнче,
Пуçне таять капмар хуламӑр
Хӑна-вӗрлемӗр умӗнче.

# ИКЁ ПИЛЕШ

***Юрий КУДАКОВ кӗвви***

Аслӑ ялӑн ҫумӗнче
Юханшыв юхса выртать,
Шывӑн ик ҫыранӗнче
Ик хитре пилеш ларать.

Ах, шывра
Хумпа хум ҫӳреҫҫӗ ҫума-ҫум,
Пӗрлешме пултараймаҫҫӗ,
Ҫырана ҫитсессӗнех
Саланса каяҫҫӗ...

Ҫуркунне хӗвел пӑхсан
Ҫурӑлаҫҫӗ пилешсем,
Илӗртӳллӗн авӑнса
Пуҫ таяҫҫӗ ҫил вӗрсен.

Юратсассӑн пӗр-пӗрне
Ӑшшӑн кул та алӑ пар, –
Икӗ тантӑш ӗмӗрне
Ӗмӗрлеҫҫӗ уйрӑмшар.

## САЛТАК ТӐМИ ЧЕЧЕКӖ

*Юрий КУДАКОВ кӗвви*

Ёшнесенче янрать саркайӑк туйӗ,
Асаплӑ шухӑш ҫуратать чунра.
Салтак тӑми чечекӗн сарӑ уйӗ
Сар тинӗс евӗр хумханать умра.

Салтак тӑми чечекӗ,
Салтак тӑми чечекӗ...
Ӑҫта халь эсӗ, асӑмри салтак?
Салтак туми чечекӗ –
Чечен вӑрҫин инкекӗ,
Пурнӑҫӑма аркатрӗ-ҫке йӑлтах.

Пире салтак тӑми паллаштарсаччӗ,
Салтак сукмакӗ пек инҫет сунса.
Чечек ҫаранӗн сарлака ҫуначӗ
Пире кӗтсе илетчӗ савӑнса.

Салтак тӑми чечекӗпе ӑсатрӑм
Сана, савниҫӗм, эпӗ аякка.
Ӑсатрӑм та – яланлӑхах ҫухатрӑм
Сана, савниҫӗм, хамӑн салтака.

# АКĂШСЕМ

*Юрий **КУДАКОВ** кĕвви*

Урама тухатăп, тӳпене пăхатăп –
Чунăма тивеççĕ тунсăх сасăсем.
Ăçталла каятăр, ăçталла васкатăр,
Шурă тутăр евĕр шурă акăшсем.

Çаралать çăкалăх, çухалать ман яшлăх,
Çулçă пек вĕçеççĕ ырă кунăмсем.
Мĕншĕн ир каятăр, мĕншĕн пит васкатăр,
Çутă ĕмĕт евĕр шурă акăшсем?

Чĕрери çеçкеçĕм тăкăнмасть тесеттĕм,
Шăпланмаççĕ теттĕм яшлăх caçĕсем.
Ах, мĕн-ма каятăр, ах, мĕн-ма васкатăр,
Шурăмпуç ачи пек шурă акăшсем?

# ÇЫРУ ÇЫРСАМĂР САЛТАКСЕМ ПАТНЕ

*Юрий КУДАКОВ кĕвви*

Ĕнер пĕрле çӳренĕ йĕкĕтсем
Паян тухаççĕ чикĕ хуралне.
Саламлăр вĕсене, чипер хĕрсем,
Çыру çырсамăр салтаксем патне.

Çӳл тӳпере хываççĕ çĕн йĕрсем,
Анаççĕ тарăн тинĕссен тĕпне...
Ан манăр вĕсене чипер хĕрсем,
Çыру çырсамăр салтаксем патне.

Ыр ĕçпеле пыраççĕ ӳстерсе
Çарти яшсем çĕршывăн хăватне,
Юратăр вĕсене, чипер хĕрсем,
Çыру çырсамăр салтаксем патне.

## ЮРЛА, САЛТАК

*Юрий КУДАКОВ кёвви*

Юрла, салтак, килӳ ҫинчен юрла,
Тăван кил-йыш кĕтет сана ялан.
Тăван ял-йыш ямасть сана асран, –
Юрла, салтак, юрла.

Юрла, салтак, савни ҫинчен юрла,
Чун-чĕрипе вĕҫет вăл сан патна,
Хĕвел пек ăшшăн асăнать ятна, –
Юрла, салтак, юрла.

Юрла, салтак, туссем ҫинчен юрла,
Сан вăй-халу – вĕсен вăй-халĕнче,
Вĕсен хăвачĕ – сан ĕҫӳсенче, –
Юрла, салтак, юрла.

Юрла, салтак, ҫĕршыв ҫинчен юрла,
Ытамĕнче усрать вăл ывăлне,
Курсах тăрать ун шухăш-кăмăлне, –
Юрла, салтак, юрла.

## ТАВРĂНАТЬ ÇАРТАН САЛТАК

*Юрий КУДАКОВ кĕвви*

Йăл кулать илемлĕ ир,
Пуç таять тăван уй-хир.
Тивĕçне татса йăлтах
Таврăнать çартан салтак.

Юрласа юхать Çавал,
Чĕрере вылять вăй-хал.
Сарăлать хыпар ялта:
Таврăнать çартан салтак.

Саламлаççĕ ватăсем,
Савăнаççĕ сар хĕрсем,
Çамрăк ăвăс пек яштак
Таврăнать çартан салтак.

Çупăрлать ачашшăн çил,
Ак умра – çуралнă кил.
Ашшĕ-амăшĕ – тултах...
Таврăнать çартан салтак.

# САЛАМ, ÇУРАЛНĂ ÇĔР

*Юрий КУДАКОВ кĕвви*

Ял-ял витĕр тухрăм, ял-ял куртăм,
Пултăм эпĕ тĕрлĕ хулара.
Хамăрах çуралнă килĕм-çуртăм
Пур пĕрех çӳрерĕ асăмра.

Уйсем урлă утрăм çухрăм-çухрăм
Уй кĕвви янрарĕ хăлхара.
Хамăрах хирте юрланă юрă
Пур пĕрех çӳрерĕ асăмрах.

Çула каяканăн çулĕ вăрăм,
Салтак çулĕ тата вăрăмрах.
Хамăра ăсатнă пиллĕ вырăн
Пур пĕрех çӳрерĕ асăмрах.

## ХУПАХÇĂСЕН ЮРРИ

*Юрий КУДАКОВ сăвви*

Чĕрере вылять кăвар:
Кашниех хастар.
Мĕн тăвар, мĕн тăвар?
Алтăрсем тытар!

Пичкисем ай-хай капмар,
Пурпĕр хăрар мар:
Мĕн тăвар, мĕн тăвар?
Çавăрса хурар!

Тус пурри вăл – пархатар!
Тусăм, алă пар!
Мĕн тăвар, мĕн тăвар?
Туслă пурăнар!

Кил, тăванăм, юнашар,
Çуммăн вырнаçар.
Мĕн тăвар, мĕн тăвар?
Юрă шăрататар!

# ÇУРХИ ЮРĂ

*Юрий КУДАКОВ кĕвв*

Куçне уçайрĕ лантăш чечекĕ,
Шурă хĕм сапрĕ çут тĕнчене.
Сарă пикеçĕм, шурă çеçкеçĕм,
Мĕншĕн пăхмастăн эс ман çине?

Эс ман çине, ай, пăхас пулсассăн,
Юрлăп эп шăпчăк, ай, сассипе.
Хирĕн-вăрманăн кайĕ ман сассăм,
Çиçĕп эп пурнăç хавасĕпе.

Çĕмĕрт вăранчĕ, сад капăрланчĕ,
Ырлăх пиллерĕ пур таврана.
Ĕмĕт хăвачĕ, шухăш çуначĕ
Çĕнĕ вăй пачĕ çамрăк чуна.

Тен, эс, савниçĕм, шурă çеçкеçĕм,
Ху та сисен пуль кăмăлăма:
Çунччăр тесессĕн çăлтăр та çиçĕм
Çак сăмаха ман каламаллах.

# АН МАН, ТĂВАН

*Юрий КУДАКОВ кĕвви*

Инçеех те тăван, çывăх тăван,
Çитсе курми çĕрте пире ан ман.
Симĕс чăрăш çине, ай, пăхса ил,
Аякри тăванна, ай, аса ил.

Ураççисем ука, кумми пурçăн,
Виçмесĕрех кĕпе, ай, ан касăр.
Эсир çĕнĕ çĕре, ай, кайнăшăн
Пире манчĕç тесе, ай, ан калăр.

Йăранах та йăран ешĕл сухан,
Чĕрсе çиеймесен, ай, чун чăтмасть.
Пĕр варта-çке выртса ӳснĕ пулсан,
Хыпар илеймесен кăмăл тулмасть.

Хурама та пĕкĕ эп автартăм
Хура лаша валли, ай, пĕветсе.
Уй хапхинчен тухса юр юрларăм,
Çичĕ ютри тăван илттĕр тесе.

Вĕçен кайăк вĕçсе çитеес çук,
Эп юрлакан юрра илтеес çук.
Асăнта тытмалли, ай, пит нумай,
Аякри тăванна ан манса кай.

# АННЕМĔРСЕМ

*Юрий* ***КУДАКОВ*** *кĕвви*

Хăй кĕввине калать хĕл каçĕ
Çил ачисем вылянăçем.
Пӳртре сăпка юрри юрлаççĕ
Асран кайми аннемĕрсем.

Сар тенкине тăкать шкул сачĕ,
Пĕлӳ тĕнчи сапать хĕлхем...
Кăшт хурланса пăхса юлаççĕ
Асран кайми аннемĕрсем.

Çут çăлтăр витĕр курăнаççĕ
Эпир çӳрес çулсем-йĕрсем.
Пире чун варринче усраççĕ
Асран кайми аннемĕрсем.

Шуракăшсем çунат сулаççĕ
Инçе çĕре ăсаннăçем...
Шуракăш евĕр туйăнаççĕ
Асран кайми аннемĕрсем.

# ПУҪĂМ КАЙРĔ ҪАВРĂНСА

*Юрий **КУДАКОВ** кĕвви*

Ҫавал кукри ҫич кукăр,
Ҫавал кукри ҫич кукăр,
Кукрисерен хăвалăх.
Ҫыр хĕрринче – хăмлалăх.
Пĕр хăмлине татрăм та
Пуҫăм кайрĕ ҫаврăнса.

Ҫавал хĕрри сад пахчи,
Ҫавал хĕрри сад пахчи,
Сад пахчисем улмаллă,
Иҫĕм ҫырли хунавлă,
Пĕр ҫырлине татрăм та
Пуҫăм кайрĕ ҫаврăнса.

Ҫавал ҫырми ҫич ҫăлкуҫ,
Ҫавал ҫырми ҫич ҫăлкуҫ,
Уничисем ҫеремлĕ,
Хĕр-пикисем хĕлхемлĕ,
Пĕр пикине пăхрăм та
Пуҫăм кайрĕ ҫаврăнса.

## АТТЕ-АННЕН ÇУРАЛНĂ КУНĔ

***Александр ОСИПОВ кĕвви***

Атте-аннен çуралнă кунĕ
Савса чĕнет тăван яла.
Ачи-пăчин хаваслă чунĕ
Киле вĕçет саркайăкла.

Çырма юхать-и шăнкăр-шăнкăр –
Пиллет тăван çăлкуç ташши.
Атте-аннен çуралнă кунĕ
Нихçан ан пултăр, ай, юлашки.

Атте-аннен сăваплă ячĕ
Таса вăй-хал кӳрет ялан.
Сенкер ачалăхăн çуначĕ
Асран тухма пĕлмест нихçан.

Кил умĕнче – хаваслăх хумĕ,
Яр уçăлать атте хапхи.
Пире хитре малашлăх сунĕ
Хуплупала пултран яшки.

# КЁРЕКЕ ÇАВРИ

***Александр ОСИПОВ кĕвви***

Кашта çинчи чăхсем пек ретĕн
Ларса упрар-и пĕрлĕхе,
Пире ятуллăн та пехетлĕн
Пуçтарчĕ сумлă кĕреке.

Эппин, черккемĕре çĕклер-и
Чунри хĕлхем хăвачĕпе,
Ун шерпетне тĕппи ĕçер-и
Çак кĕрекемĕр ячĕпе.

Курсамăр: хур чĕппи – пĕр пуслăх –
Пĕр йĕрпеле утать умра.
Пире çапла усрарĕ туслăх
Хĕвеллĕ, çутă тытăмра.

Эппин, çак туслăхшăн тытар-и,
Туссемĕр, тепĕр черккине,
Пирти тăванлăх пархатарĕ
Çĕнеттĕр хăй кĕвелĕкне.

Атте-анне, лаштра йăмралăх,
Асран кайми чăваш тĕнчи,
Туссемĕр, пиллĕхлĕ малашлăх
Пулинччĕ çĕнĕ кун ĕнчи.

Атте-аннешĕн, хамăр еншĕн
Тăрар, туссем, ура çине,
Çурхи пахча мĕнле ем-ешĕл,
Çапла курар кĕр çимĕçне.

## НИКАМА ТА АН КАЛА

*Михаил МИХАЙЛОВ кĕвви*

Йăрăс хурăн, ешĕл хурăн,
Симĕс тутăр, шур кĕпе.
Укаланнă улăх урлă
Эпĕ утрăм савнипе.
Эпĕ утрăм савнипе
Юрату сукмакĕпе,
Хурăн, сисрĕн пулмалла, –
Никама та ан кала.

Тăрă Шетмĕ, хумлă Шетмĕ,
Кĕмĕл карлăклă кĕпер.
Чун-чĕрешĕн каç кĕске-мĕн –
Ир ирлерĕмĕр эпир.
Эпĕ каçрăм савнипе
Юрату кĕперĕпе.
Шетмĕ, илтрĕн пулмалла –
Никама та ан кала.

Çĕнĕ уйăх çӳл тӳпешĕн –
Ылтăн тĕслĕ куç харши.
Çак телейлĕ каç мĕскершĕн
Вăрăмрах пулмарĕ-ши?
Эп калаçрăм савнипе
Юрату сăмахĕпе,
Уйăх, куртăн пулмалла, –
Никама та ан кала.

## КИЛ-ЙЫШ ЮРРИ

*Николай АНДРЕЕВ кӗвви*

Сирӗн ҫул Анаткасран тухатчӗ,
Пирӗн ҫул тухатчӗ Тукасран.
Пӗр чӗкеҫӗн ик патвар ҫуначӗ
Пулчӗҫ-тӑчӗҫ ҫав ҫулсем кайран.

Юрату – пӗрлештерӳ хӑвачӗ,
Юрату телей кӳрет пире,
Юрату – ҫӗн шуҫӑмсен хӑмачӗ,
Юратар-и ӗмӗр-ӗмӗрех!

Хӑтлӑ пулчӗ ҫавӑрнӑ йӑвамӑр,
Ӑшӑ пулчӗ ытарми тӗпел.
Ма тесессӗн – ӑнланатпӑр хамӑр:
Килтенех тухать килти хӗвел.

Кӑйкӑр пек вӗҫеҫҫӗ ывӑлсемӗр,
Акӑш пек вӗҫеҫҫӗ хӗрӗсем.
Сывлӑм витӗр килнӗ шӑпчӑк евӗр
Савӑнар-и, ырӑ тӑвансем!

# ЧУНĂМА АН ХУСКАТ

*Юрий ЖУКОВ кĕвви*

Мĕншĕн, мĕншĕн каллех эс тухатăн
Купăспа униче хĕррине?
Мĕншĕн, мĕншĕн чуна хускататăн,
Юррупа пăлхатан чĕрене?

Ҫĕршыва инҫетре эс сыхларăн,
Икĕ ҫул куҫ пек кĕтрĕм сана,
Анчах эсĕ мĕн-ма тытаймарăн
Манмăп тенĕ хитре сăмахна?

Халĕ ҫĕнĕ касра пурăнатăп,
Пĕчĕк хĕрĕм сикет сăпкара.
Чӳречем урама пăхмасан та
Сан юрру янăрать хăлхарах.

Ҫăкăртан касса уйăрнă чĕлĕ
Каялла пур пĕрех ҫыпăҫмасть.
Чунăма ан хускат, кĕмĕл чĕлĕх,
Иртнине ан вăрат кашни каҫ.

## ЙĂЛ КУЛСАМ, САВНИÇĔМ

*Юрий ЖУКОВ кĕвви*

Йăл кулсам, савниçĕм, йăл кулсам,
Сивĕ хĕл тарать эс йăл кулсан.
Шăнкăр-шăнкăр çуркунне çитет,
Таврана шап-шур çеçке витет.

Йăл кулсам, савниçĕм, йăл кулсам,
Шăпчăк вăранать эс йăл кулсан.
Кĕмĕл хĕлĕх кĕввине калать,
Çут хĕвеллĕ ĕмĕт çуралать.

Йăл кулсам, савниçĕм, йăл кулсам,
Чунăм савăнать эс йăл кулсан.
Асăмран тухмасть хитре яту,
Ешерет асамлă юрату.

Йăл кулсам, савниçĕм, йăл кулсам,
Сивĕ хĕл тарать эс йăл кулсан,
Шăнкăр-шăнкăр çуркунне çитет,
Таврана шап-шур çеçке витет.

## АЙ-ХАЙ, ТУСĂМ, ЯНРАТАР

*Юрий ЖУКОВ кĕвви*

Сенкер тӳпе айĕнче
Ылтăн тĕслĕ хĕвел пур,
Сарă хĕвел сăнĕнче
Манăн савни сăнĕ пур.
Ай-хай, тусăм, янратар,
Çĕнĕ юрă шăратар,
Савни хĕвел пулсассăн,
Мĕншĕн хĕвел пулас мар?

Шурă çĕмĕрт тăрринче
Кĕмĕл тĕслĕ уйăх пур,
Кĕмĕл уйăх сăнĕнче
Манăн савни сăнĕ пур.
Ай-хай, тусăм, янратар,
Çĕнĕ юрă шăратар,
Савни уйăх пулсассăн
Мĕншĕн уйăх пулас мар?

Шурăмпуç ытамĕнче
Йăлтăр-йăлтăр çăлтăр пур,
Çавă çăлтăр сăнĕнче
Манăн савни сăнĕ пур.
Ай-хай, тусăм, янратар,
Çĕнĕ юрă шăратар,
Савни çăлтăр пулсассăн
Мĕншĕн çăлтăр пулас мар?

# ШĂНКĂР-ШĂНКĂР ÇĂЛКУÇ

***Юрий ЖУКОВ кĕвви***

Шăнкăр-шăнкăр çăлкуç,
Кăмăла эс ан хуç,
Çурхи каç кĕввине каласа,
Сан патна çитсенех,
Сассуна илтсенех
Иртнĕ кунăм килет-çке аса.

Çĕмĕртсем çурăлсан,
Кĕмĕл уйăх тухсан,
Шăпчăксем шăрататчĕç юрра.
Иккĕн шăп ларнă чух,
Куçран куç пăхнă чух
Шăнкăр шыв калаçатчĕ умра.

Шăнкăр-шăнкăр çăлкуç,
Йăлтăркка шурăмпуç
Çупăрлатчĕç телей ĕшнине.
Сисеймерĕ чĕрем,
Пĕлеймерĕ чĕрем
Уйрăлу çывăхра пулнине.

Вĕрене сулçине
Халь тăкать шыв çине,
Эп кунта пĕчченех анасса.
Шăнкăр-шăнкăр çăлкуç,
Кăмăла эс ан хуç,
Çурхи каç кĕввине каласа.

## МЁН МАНТАРЧЁ-ШИ?

*Андрей ГАЛКИН кěвви*

Иксěмěр çӳренě вырăна
Халь тухатăп эп пěччен кăна.
Кăмăла хускатнă таврана,
Тусăм, мěн мантарчě-ши сана?

Иккěн ларнă сăрлă сак çине
Пěччененех ларатăп-çке пырса.
Тусăм, çав хитре самантсене
Мěнле туйăм илчě-ши туртса?

Иксěмěр итленě шăпчăка
Каçсерен итлетěп халь пěччен.
Чěрере çуралнă шанчăка
Кам вěçтерчě хăйěн йăвинчен?

Шурă хурăн ешěл çилхине
Ман çине хурса лăпкать чуна.
Юрату пилленě кунсене,
Тусăм, мěн мантарчě-ши сана?

# ВИÇĔ ÇУРТА

*Андрей ГАЛКИН кĕвви*

Анăç сĕмĕ çапсассăн тулта
Пӳлĕмре эп çутатăп
Виç сăмах ячĕпе виç çурта:
Эп сана юрататăп.

Чĕрери иксĕлми хăвата,
Иксĕлми туйăма
Пĕлтерсемччĕ, умри виç çурта:
Эп сана юрататăп.

Эс ĕçре-и е вăрăм çулта,
Ăнлансамччĕ, çунатăм,
Саншăн çеç хĕмленет виç çурта:
Эп сана юрататăп.

Чунăма вăй парать те туртать,
Илĕртет асаматăн,
Яланах ялкăшать виç çурта:
Эп сана юрататăп.

# КАЛАСАМ, ЙӐМРА

*Андрей ГАЛКИН кӗвви*

Лаштраях йӑмра авӑнать,
Сарӑях ыраш пуҫ таять.
Каласам, йӑмра, каласам, ыраш,
Ма чӗрем пӑлханать?

Тӗл пулсаттӑмӑр ҫакӑнта
Шӑпчӑксем юрлан яхӑнта.
Ал парсаттӑмӑр, юратсаттӑмӑр,
Ҫакӑнта, ҫакӑнта...

Эпӗ санӑнччӗ ун чухне,
Эсӗ  манӑнччӗ ун чухне.
Халь ӑҫта-ши эс, халь ӑҫта-ши эс,
Ытарми ҫуркунне?

# ШЕТМĔ ШЫВĔ

*Вилорик РОМАНОВ кĕвви*

Ун чухне эс каçă хыврăн
Шетмĕ урлă çуркунне.
Каçă хыврăн – сыпăнтартăн
Юрату утма çулне.

Шетмĕ шывĕ,
Шетмĕ шывĕ,
Шыв юхать,
Çыран юлать...

Каçсерен каçма аванччĕ
Каçăпа ялтан яла,
Ĕшнере ирччен юрлатчĕç
Шăпчăксем ăмăртмалла.

Халь пĕччен аса илетĕп
Ытарми вăхăтсене,
Шыв хĕрне анса кĕтетĕп
Эс çартан килессине.

# ШУРАППАСЕМ

*Зоя ПЕТРОВА кěвви*

Шураппасем, сире курса
Çурхи çанталăк вăранать,
Юмах тěнчи пек çуталса
Чунра хаваслăх шăранать.

Шураппасем, шураппасем,
Эсир – тěнче илемě,
Шураппасем, сар кайăксем,
Эсир – кун-çул хěлхемě.

Шураппасем, эсир пуртан
Çунатланать сатур вăй-хал,
Хěвел ăшшипеле пěр тан
Юратупа хěрӳ халал.

Анне тени, аппа тени
Янрать асамлă юрă пек,
Сӳнми телей кӳрекенни –
Сирти ачашлăхпа тěрек.

# ЫЛТĂН КАÇ

*Зоя ПЕТРОВА кĕвви*

Çĕр çине тăкăнать ылтăн çутă,
Ылтăн шывĕ юхать валакран.
Ылтăн пек туйăнать калаçу та
Сăмаххи ылтăн пек пулнăран.

*Хушса юрламалли:*

Чунпа чун пĕр-пĕрне ăнлансан
Тӳпене ăнтăлать çунату.
Чĕрене вырнаçать нихăçан,
Нихăçан сивĕнми юрату.
Юрату, юрату,
Нихăçан сивĕнми юрату.

Садсенче янăрать ылтăн юрă,
Çурăлать ылтăн тĕслĕ чечек.
Ĕмĕтри телее эпĕ тупрăм,
Ăраскалăм – тулли уйăх пек.

Тухăçран шурăмпуç хăпарасшăн
Шуратма тулли уйăх сăнне.
Шурăмпуç, тăхтасамччĕ тархасшăн,
Ан сирсем ылтăн каç илемне.

# САРĂ КАЙĂК

*Зоя ПЕТРОВА кĕвви*

Савни, мана аса ил,
Сарă кайăк тытса кил,
Ăна ларса юрлама
Тураттине хуçса кил.

Ай-хай, сарă кайăк,
Сарă кайăк, чун савни,
Каланине манмăн-и те
Сăмаххуна тытăн-и?

Кайăк патне пынă чух
Кайăк чĕлхипе калаç,
Савни патне килнĕ чух
Савни чĕлхипе калаç.

Сарă кайăк сассипе
Савни чунĕ вăранать,
Савни чунĕ вăранать,
Хĕрĕх хĕлĕх янăрать.

Хĕрĕх хĕлĕх кĕввинчен,
Савни, эсĕ юрă ту.
Ик чĕрен пĕр юрринче
Çеçке çуртăр юрату.

## ШУРĂ ЛАНТĂШ

*Илья СТЕПАНОВ кĕвви*

Çуркунне çурăлан шурă лантăш,
Ах, ларинччĕ кăштах пахчара.
Сĕрме купăс калан ырă тантăш,
Ах, калинччĕ эп кĕтнĕ юрра.

Тăхтамарĕ чечек, тăхтамарĕ,
Ӳкрĕ унăн çеçки çĕр çине.
Каламарĕ савни, каламарĕ
Ман ятпа юрату кĕввине.

Сар хĕвел ăшшăн-ăшшăн пăхсан та
Лантăш тек çеçкене ларас çук.
Хам ялан ун çинчен шутласан та
Тантăш-тусăм мана савас çук.

Кӳлĕре ишекен кăвакалăн
Ах, мĕн-ма чĕпписем пĕр мар-ши?
Çĕр çинче юрату ăраскалĕ
Ах, мĕн-ма кашниннех пĕр мар-ши?



8. Заказ № К-3569

## ЧĂВАШ ЕН ЮРРИ

*Авраам **БУРУНДУКОВ** кĕвви*

Каш-каш вăрман пек кашласа,
Хирти тыр-пул пек пуç тайса,
Мĕн Атăл евĕр хумханса
Сана мухтатпăр, Чăваш ен.

*Хушса юрламалли:*

Хастар йышра мĕнле аван:
Чун-чĕрере – çĕн шухăшсем.
Пур тус-тăван
Пĕр пулнăран
Йăнаççĕ пирĕн пурнăçсем.

Атте-анне пехилĕпе,
Аки-сухи тивлечĕпе,
Çĕн ăрусен вăй-халĕпе
Сана çĕклетпĕр, Чăваш ен.

Çĕр пин сăмах хĕлхемĕпе,
Çĕр пин юррун илемĕпе,
Çĕр пин тĕррӳн эрешĕпе
Пур пул эс ĕмĕр, Чăваш ен.

## КАЙРИКАС КАЧЧИ

*Авраам БУРУНДУКОВ кӗвви*

Каласа парсамччӗ,
Путӗр путене,
Кӑйкӑр евӗр каччӑ
Ма усать пуҫне?
Путене пуплерӗ:
– Тусӑм, ан кулян,
Анаткасӑн хӗрӗ
Пурпӗр пулӗ сан.

Шухӑшна уҫсамччӗ,
Шукӑль шӑкӑлчи,
Ма ӳкет ҫуначӗ
Кайрикас каччин?
Шӑкӑлчи пуплерӗ:
– Тусӑм, ан кулян,
Анаткасӑн хӗрӗ
Пурпӗр пулӗ сан.

Сарӑ кайӑк мар-им,
Шӑпчӑк мар-им эп,
Юрату кӑварӑн
Хӗмӗ мар-и эп?
Асамат кӗперӗ
Хывӑп паянах,
Анаткасӑн хӗрӗ
Пулӗ манӑнах.

# ЭС ИРЕХ ТӐРСАССӐН

*Николай АЛЕКСЕЕВ кĕвви*

Эс ирех тӑрсассӑн, сарпикем,
Кантӑк кайӗ уҫӑлса.
Вӑштӑр-вӑштӑр ҫил пек туйӑмсем
Кӗрӗҫ савӑнса.
Кам ҫӳрет тесе эс ан шутла,
Ан тинкер урамалла.
Эпӗ вӑл, савниҫӗм,
Эпӗ вӑл, савниҫӗм,
Эпӗ вӑл, савниҫӗм, сарпикем.

Эс ирех тӑрсассӑн, сарпикем,
Юрӑ кайӗ янраса.
Ҫуркунне пек ҫутӑ кӗвӗсем
Юхӗҫ шӑранса.
Кам юрлать тесе эс ан шутла,
Ан тинкер урамалла.
Эпӗ вӑл, савниҫӗм,
Эпӗ вӑл, савниҫӗм,
Эпӗ вӑл, савниҫӗм-сарпикем.

Эс ирех тӑрсассӑн, сарпикем,
Лантӑш ларӗ пуҫ тайса.
Куҫран пӑхӗҫ шурӑ шӑрҫисем
Ырӑ кун сунса.
Кам пӑхать тесе эс ан шутла,
Ан тинкер урамалла.
Эпӗ вӑл, савниҫӗм,
Эпӗ вӑл савниҫӗм,
Эпӗ вӑл савниҫӗм-сарпикем.

## НАТАЛИ

***Иван ХРИСТОФОРОВ кӗвви***

Эпӗ сан патна пынӑ чухне,
Юратап тесшӗн çуннӑ чухне
Сивӗ çил мӗншӗн хыт вӗрчӗ-ши,
Кӗрхи çумӑр мӗн-ма çурӗ-ши?

Натали, Натали,
Хирӗç тухсам,
Натали, Натали,
Ӑшшӑн кулсам.
Чӗрене эсӗ
Кӗрсе кур,
Сан валли унта
Пурте пур.

Хӑвӑртрах çывхарасчӗ тесе,
Кантӑкран сас парасчӗ тесе
Эпӗ туртӑнаттӑм пур вӑйпа,
Анчах кайрӑм санран аякка.

Аякран та çап-çут çутатан,
Чунӑма хӑв патна эс туртан.
Чару çуккӑ текех ман валли,
Таврӑнатӑп яла, Натали!

# ТЕЛЕЙ СУНАТĂП

*Иван ХРИСТОФОРОВ кĕвви*

Çĕн кун, сенкер чаршав уçса
Умра йăл кулнăçем,
Кашни çынна куçран пăхса
Савса ал панăçем,
Сире, туссем-тăванăмсем,
Эп пуç таятăп,
Сире, туссем-тăванăмсем,
Телей сунатăп.

Хаваслă çил ыраш пуссин
Хуткупăсне калать,
Хĕвелĕн чĕнтĕрлĕ хурси
Уйра уйран уçлать.
Сире туссем-тăванăмсем,
Эп пуç таятăп,
Сире, туссем-тăванăмсем,
Телей сунатăп.

Шап-шурă хурăн тăхăнать
Пин ярăмлă кĕпе.
Савнипеле савни утать
Телей сукмакĕпе.
Сире, туссем-тăванăмсем,
Эп пуç таятăп,
Сире, туссем-тăванăмсем,
Телей сунатăп.

# ЁМЁТ

*Иван ХРИСТОФОРОВ кĕвви*

Çурхи хĕвел пăхать асамлăн,
Савниçĕм, çĕмĕрт çеçкине.
Хĕвел пулса тухасчĕ манăн
Эс çӳрекен çулсем çине.

Шуракăш таврăнать васкавлăн,
Савниçĕм, акăш кӳллине,
Ăш çил пулса вĕресчĕ манăн
Эс тытнă кимĕ çилкĕçне.

Тӳпе телей вут-хĕмĕ сапнăн,
Савниçĕм, ырă каçхине,
Телей пулса кĕресчĕ манăн
Эс куракан тĕлĕксене.

## ХĔВЕЛТУХĂÇ, ХĔВЕЛАНĂÇ

***Иван ХРИСТОФОРОВ кĕвви***

Сарă кайăк, сарă кайăк
Хăш еннелле вĕçрĕ-ши,
Сарă кайăк кўнĕ савăк
Ăçта кайса кĕчĕ-ши?
Хĕвелтухăç, хĕвеланăç,
Кун тăршши – вĕсен хушши,
Чĕрере çухалчĕ канăç,
Хăш енче тупайăп-ши?

Ай, пикем, сарпикем,
Чун çунтармăш эс иккен.
Иксĕмĕр пĕрле пулсассăн
Кайăк та юрлать иккен.

Çĕмĕртсем çеçке çураççĕ,
Тусăм, эсĕ йăл кулсан.
Çăлтăрсем те ал çупаççĕ,
Тусăм, эс ташша тухсан.
Хĕвелтухăç, хĕвеланăç,
Кун тăршши – вĕсен хушши,
Чĕрере çуралнă шанăç
Пурнăçра кĕрейĕ-ши?

## НЕСЁЛ ЮРРИ

*Николай ЗИМИН кĕвви*

Ăсаннă, иртнĕ çич ĕмĕр
Сийне уçса çиçĕмле,
Куратăп эпĕ, туссемĕр,
Умри пин-пин несĕле:
Утаççĕ шăппăн, сас-чӳсĕр,
Таяççĕ пуç хĕвеле,
Утаççĕ вĕсем, утаççĕ вĕсем,
Вунçич сыпăкри несĕлсем.

*Хушса юрламалли:*

Манмалла мар ваттисене!
Манмалла мар кайнисене!
Манмалла мар, манмалла мар,
Манмалла мар тăвансене.

Утаççĕ аслă вăрманăн
Çавра çулçи çутипе,
Утаççĕ Атăл-Çавалăн
Тупа анат кукрипе,
Курнаççĕ ватă юманăн
Кĕреш, патвар пĕвĕ пек,
Ĕçчен те вĕсем, сăпай та вĕсем,
Вунçич сыпăкри несĕлсем.

Тăван чĕлхе – чун хĕлхемĕ,
Пур халăх ăсĕ унра,
Тĕррин асамлă илемĕ
Тăрать хаваллăн умра,
Кĕвви – аваллăх элемĕ –
Чĕртет малашлăх юнра...
Хисеплĕ вĕсем, сăваплă вĕсем,
Вунçич сыпăкри несĕлсем.

# ИКĔ АКĂШ

*Николай ЗИМИН кĕвви*

Юнашар вĕçет ик шурă акăш,
Хĕлĕх саслă кĕвĕ каласа.
Сар хĕвел шевлиллĕ ырă савăш
Шур чечек çеçки пекех таса...

Сăрт та çук-çке, чунăмçăм-кĕтретĕм,
Эс кунта килес сукмак çинче,
Çук-çке, тусăм, тарăн шыв кукри те
Иккĕн ўснĕ ял урамĕнче.
Мĕн сăлтавшăн эп пĕччен çўретĕп,
Мĕншĕн эсĕ те пĕр-пĕччен?

Çеçкине тăкать ик хĕрлĕ мăкăнь,
Пуç таять лĕп çилĕ вĕрнĕ май.
Ан ўксем, çеçкем, халех ан тăкăн,
Çуркуннем, халех иртсе ан кай.

Çуркунне сана каласа сăмахăм
Сан патна çитет-ши кĕркунне,
Яшлăхри çилхеллĕ урхамахăн
Хускатать-ши савнă хĕр чунне?
Ма çўретĕн эс пĕччен, хăрахăн,
Ма пĕччен-ши эп кĕр енне?

## ШУР ХУЛАМӐР ШУПАШКАР

*Станислав ТОЛСТОВ кӗвви*

Йӑлтӑркка хумсем килеççӗ
Алла-аллӑн тытӑнса,
Кимӗсем ишсе çӳреççӗ
Акӑш евӗр ярӑнса.
Çут тӗнчен илем кӗтесӗ,
Турӑ панӑ пархатар,
Шурӑ акӑш мар-ши эсӗ,
Шур хуламӑр Шупашкар?

Пахчисем уртаççӗ шупӑр
Çурхи ӑшӑ каçсенче,
Шӑпчӑксем калаççӗ шӑпӑр
Кӗмӗл уйӑх айӗнче.
Çут тӗнчен паха кӗтесӗ –
Хурӑнсар та çӑкасар,
Ырлӑх сачӗ мар-ши эсӗ,
Шур хуламӑр Шупашкар?

Чӗрене лӑпкать сӑмахӗ,
Вӑй хушать юрри-ташши,
Сар хӗрсен тӗрри-ахахӗ –
Чун уççи те чун ӑшши.
Çут тӗнчен хитре кӗтесӗ,
Турӑ панӑ пархатар,
Чӑваш чунӗ мар-ши эсӗ,
Шур хуламӑр Шупашкар?

# ВЕРА, ВЕРОНИКА

*Станислав ТОЛСТОВ кĕвви*

Утсам, савниçĕм, ярănса утсам,
Телей сукмакĕпе утсам.
Сан уттупа чиперленет илем,
Савса пăхаççĕ чечексем.

Вера, Вера, Вера, Вероника,
Тӳперен çутатакан хĕвелĕм.
Вера, Вера, Вера, Вероника,
Эсĕ – манăн пурнăçри телейĕм.

Юрла, савниçĕм, савăнса юрла,
Ирхи саркайăк пек юрла.
Сан сассупа юрлаççĕ шăпчăксем,
Чунра выляççĕ шевлесем.

Ташла, савниçĕм, савăнса юрла,
Ташла эс шурă акăшла.
Çурхи сипет килет сан ташшупа,
Умра кĕтет çут çăлтăрлă шăпа.

## ÇУХАЛМАН ЭП

*Владимир АЛЕКСАНДРОВ кӗвви*

Эс мана çухатрăм тетӗн,
Эс мана шыратăп тетӗн,
Çут керменлӗ хулара,
Хамăр аслă урамра.

Çухалман эп, çухалман,
Шыраса ан асаплан:
Эс çӳренӗ чух тура
Эп çӳретӗп анатра,
Ма итлесшӗн ман юрра
Эсӗ урăх пахчара?

Ешерет чечек кăварăн,
Эс ăна асăрхамарăн,
Кайрăн эс теприн патне,
Пăшăлтатрăн ун ятне.

Çухалман эп, савнă тусăм,
Эпӗ – çăлтăр, эпӗ – шуçăм,
Эпӗ санăн умăнта,
Чӗрӳнте те чунăнта.

## КЁМЁЛ ТУЙ

***Владимир АЛЕКСАНДРОВ кěвви***

Йăлтăрать тӳпе те уй –
Килчě-çитрě кěмěл туй.
Саламлатпăр мăшăра
Юрăра та ташăра.

Кěмěл тěслě кěмěл туй,
Кěмěл саслă кěмěл туй.
Пěтěм халăх савăнать,
Савăк сасă ян каять.
Кěр кěрле эс, кěмěл туй,
Кěмěлрен пул ылтăн туй.

Пурнăç çулě çăмăл мар,
Пурпěрех эсир патвар.
Хăрамарăр йывăртан
Юрату пулăшнăран.

Пуç таяççě ачăрсем –
Акăшсем те кăйкăрсем.
Пӳрт тулли тăванăрсем –
Пурнăçри çунатăрсем.

## САРПИКЕМ, ХЁР-ПИКЕМ

*Родион ПЕТРОВ кĕвви*

Çутă çăлтăр эп шырарăм
Йăлтăр-йăлтăр тӳпере,
Тӳпере тĕл пулаймарăм
Тупрăм хамăр кӳршĕре.
Сарпикем, хĕр-пикем
Çăлтăртан та çутăрах,
Çăлтăртан та çутăрах,
Хĕвелтен те ăшăрах.

Эп хитре чечек шырарăм
Çурхи ешĕл улăхра,
Улăхра тĕл пулаймарăм,
Тупрăм хамăр урамра.
Сарпикем, хĕр-пикем
Мăкăньрен те хитререх,
Мăкăньрен те хитререх,
Лантăшран та хӳхĕмрех.

Юрăç-кайăк эп шырарăм
Шур çеçкеллĕ пахчара,
Пахчара тĕл пулаймарăм,
Тупрăм хамăр вăйăра.
Сарпикем, хĕр-пикем
Шăпчăкран та çепĕçрех,
Шăпчăкран та çепĕçрех,
Тăрирен те селĕмрех.

# КĔЛЧЕЧЕК

*Родион ПЕТРОВ кĕвви*

Тусăм, иксĕмĕр ятпа
Эп ӳстертĕм кĕлчечек.
Ма вăл тунсăхлă куçпа
Ман енне пăхать ирех?

*Хушса юрламалли:*

Кĕлчечекĕм, кĕлчечекĕм,
Чĕрери шĕл-кăвар,
Пĕлтерсем, хитре чечекĕм,
Мана хитре хыпар.

Вăйăран пĕччен ансан
Кĕтĕм эпĕ пахчана.
Урăх вăл çынна ан шан,
Терĕ кĕлчечек мана.

Халь ăçта эс, ырă тус,
Хăш ялта, хăш урамра?
Иккĕн чĕртнĕ юрату
Сӳнсе лармĕ-ши чунра?

# ЕПЛЕ ХИТРЕ, САВНИҪЁМ, ЭС ПАЯН

*Олег КĂЙКĂР кĕвви*

Епле хитре, савниҫĕм, эс паян:
Ҫурхи ҫеҫке пек ешерсе тăран.
Куҫу вĕри кăвар пек йăл ҫиҫет,
Сассу ҫăлкуҫ сасси пек илтĕнет.

Эх, савниҫĕм,
Пиҫнĕ иҫĕм,
Илĕртетĕн эс мана,
Сан ҫинчен шутлатăп вĕҫĕм,
Тунсăхлатăп яланах.

Епле хитре, савниҫĕм, эс паян:
Илемлĕх асамҫи пек туйăнан.
Йăл куллунта йăлтăртатать ахах,
Халь-халь таҫта вĕҫсе каяссăнах.

Епле хитре, савниҫĕм, эс паян:
Шуракăш евĕр ярăнса утан.
Сан ятупах мĕн пур тĕнче ырри
Паян юрлать пуль юрату юрри.



9. Заказ № К-3569

# ИКĔ КĂМĂЛ ПĔР ПУЛСАН

*Олег КĂЙКĂР кĕвви*

Хĕм, хĕм, виçĕ хĕм,
Виç хĕм çумне икĕ хĕм.
Виçĕ хĕмĕ эс пулсассăн
Икĕ хĕмĕ эп пулам.
Икĕ шухăш пĕр пулсассăн
Ĕмĕт кайĕ малалла.

Хум, хум, виçĕ хум,
Виç хум çумне икĕ хум.
Виçĕ хумĕ эс пулсассăн
Икĕ хумĕ эп пулам.
Икĕ туйăм пĕр пулсассăн
Туслăх кайĕ малалла.

Сум, сум, виçĕ сум,
Виç сум çумне икĕ сум.
Виçĕ сумĕ эс пулсассăн
Икĕ сумĕ эп пулам.
Икĕ кăмăл пĕр пулсассăн
Пурнăç кайĕ малалла.

## ХĔВЕЛЛĔ ÇУРКУННЕ

*Олег КĂЙКĂР кĕвви*

Мĕн-ма кăçал кунсем хĕвеллĕ,
Мĕн-ма кăçал чунсем телейлĕ?
Савни, сана тĕл пулнăран,
Куçу хĕвел пек кулнăран.

Мĕн-ма кашни чечек кăварĕ
Калать мана чĕкеç хыпарĕ?
Савни, сана тĕл пулнăран,
Чуну кăвар пек çуннăран.

Мĕн-ма кăçал садри саркайăк
Юрлать нихçанхинчен те лайăх?
Савни, сана тĕл пулнăран,
Юрру асамлăн юхнăран.

# САРКАЙӐКСЕН САССИПЕЛЕ

*Олег КӐЙКӐР кӗвви*

Юрла-юрла юхать тӑр шыв,
Юхать чул ҫийӗн аната.
Савниҫӗм, шыв васканӑ пек
Чупса килсемччӗ ман пата.

Саркайӑксен сассипеле
Ҫӗн юрӑ ӗнерет ката,
Калать вӑл шӑппӑн-шӑппӑн сан ята,
Саркайӑксен сассипеле
Ҫӗн юрӑ ӗнерет ката,
Калать вӑл шӑппӑн-шӑппӑн ман ята...

Пӗччен утса ӗшеннӗ чун
Тӗтрелӗхре ҫул ҫухатать,
Хӗвелӗм, ай, килсем, килсем,
Сирсем асаплӑ вӑхӑта.

# ЮРАТУ ЯЧЁПЕ

***Владимир ФЕДОРОВ кёвви***

Тӳпере хунарсем майёпен çуталаççё,
Калаçаççё шап-шурă улма сачёпе.
Шăпчăксем тăван ен ытамне таврăнаççё
Юрату ячёпе, юрату ячёпе.

Пахчари чечексем шёл-кăваррăн çунаççё,
Çеçкери çёмёртсем пикесем пек чипер.
Чёрере варкăшать çуркуннемёр çуначё
Юрату ячёпе, юрату ячёпе.

Туй парни хурасса кётекен кёмёл ывсă –
Тулли уйăх – çӳрет çăлтăрсен речёпе.
Çёнё пурнăç малашё пиллет пире, тусăм,
Юрату ячёпе, юрату ячёпе.

# ЭП ПЁЛЕТЁП

*Владимир ФЕДОРОВ кёвви*

Эп пёлетёп, эп пёлетёп
Эс ăçта пурăннине,
Сенкер тёслё пёлёте те
Питё çывăх пулнине.

Эп тупатăп çав çурта,
Çирём иккёмёш хута
Хăпарăп çил варкăшё пулса.
Çурма уçă кантăкран
Эп кёреп те ăнсăртран
Тутунтан илетёп чуп туса.

Эс туятăн, эс туятăн
Кам сана шыранине,
Кăвакарчăн пек çунатлăн
Ир те каç сăнанине.

Сарпикеçём, çёмёрт куçăм,
Шухăшпа эс ан шурал:
Пўлёме çутатнăн шуçăм
Килё пирён ăраскал.

## ПАЛАН ШАП-ШУРӐ ЛАРНӐ ВӐХӐТРА

*Владимир ФЕДОРОВ кӗвви*

Палан шап-шурӑ ларнӑ вӑхӑтра
Çурхи тӗнче хӗвеллӗ те кӑтра.
Телей кӗвви шӑрантарать тавра,
Хаваслӑ туйӑм хӗмленет чунра.

Палан шап-шурӑ ларнӑ вӑхӑтра
Каçсем те ӑшӑ ешӗл пахчара.
Мӑн Атӑл пек малаш çиçет умра
Çӗн кун çуралнӑ ырӑ самантра.

Палан шап-шурӑ ларнӑ вӑхӑтра
Юрлать саркайӑк эс юрлас юрра.
Çук çухату, куççуль те ырату,
Çӳрет ачашшӑн çепӗç юрату.

# ЭЙ, ÇĔРШЫВĂМĂР, ЧĂВАШ ЕНĔМĔР

*Владимир **ФЕДОРОВ** кĕвви*

Эй, çĕршывăмăр, Чăваш енĕмĕр,
Аслă уйăмăр, аслă хирĕмĕр!
Эс саван пире, эс çĕклен пире,
Ырлăхне курма пил паран пире.

Эй, çĕршывăмăр, Чăваш енĕмĕр,
Ăраскалăмăр, çут хĕвелĕмĕр!
Сан ятпа эпир юрă хыврăмăр,
Сан ятпа кĕрлет акатуйăмăр.

Эй, çĕршывăмăр, Чăваш енĕмĕр,
Туслă йышăмăр, туслă килĕмĕр!
Чĕререн-чунтан тавтапуç сана,
Чĕререн-чунтан таймапуç сана.

## КАÇРĂМĂР, КАÇРĂМĂР

*Виталий УГАНИН кĕвви*

Тантăшсене пухрăмăр,
Инçе çула тухрăмăр,
Каçрăмăр, каçрăмăр,
Шетмĕ урлă каçрăмăр,
Шетмĕ урлă каçрăмăр та
Ункă хĕрне тухрăмăр.

Ункă урлă каçрăмăр,
Утнăçемĕн утрăмăр,
Каçрăмăр, каçрăмăр,
Ункă урлă каçрăмăр,
Ункă урлă каçрăмăр та
Атăл енне тухрăмăр.

Атăл енне тухрăмăр,
Ывăнмасăр утрăмăр,
Каçрăмăр, каçрăмăр,
Атăл урлă каçрăмăр,
Атăл урлă каçрăмăр та
Тĕнче умне тухрăмăр.

## ЭС ÇУРАЛНĂ, ТĂВАНĂМ, ПАЯН

*Галина СКВОРЦОВА кĕвви*

Ма паян йăл кулать сар хĕвел,
Ма паян пит хаваслă тĕпел?
Эс çуралнă, тăванăм, паян,
Çавăнпа савăнатпăр чунтан.

Ылтăн тетпĕр ĕçчен аллуна,
Кĕмĕл тетпĕр ян-ян сассуна.
Эс çуралнă, тăванăм, паян,
Çавăнпа свăнатпăр чунтан.

Çумăнта – мăшăру, ачусем,
Юнашар – ытарми тăвансем.
Эс çуралнă, тăванăм, паян,
Çавăнпа савăнатпăр чунтан.

Ырă ят пурлăхран хаклăрах,
Ырă кăмăл – мерчен те ахах,
Эс çуралнă, тăванăм, паян,
Çавăнпа ыталатпăр чунтан.

# ХАЛЕХ АН КАЙ, ТӐВАН

***Галина СКВОРЦОВА кӗвви***

Пуҫна ан тай, тӑван, пуҫна ан тай,
Ирех тухса ан кӳл ҫӳрен утна.
Курса тӑранаймарӑмӑр сана,
Ӑшпиллӗн уҫаймарӑмӑр чуна.

Кӑштах ларсам, тӑван, кӑштах ларсам,
Симпыл сӑри ӗҫер-ха тав туса.
Пӗрер ҫавра илер-ха юрласа,
Шуракӑш пек пӑхар-ха ташласа.

Халех ан кай, тӑван, халех ан кай,
Ахаль те курнӑҫатпӑр-ҫке сайра.
Ир хускалса каллех ир кайнӑран
Чунсем хурланӗҫ тахҫанччен кайран.

## МАНМАСТПĂР

*Галина СКВОРЦОВА кĕвви*

Сиртен хыпар илнипе
Урхамахне кӳлтĕмĕр,
Сарă çӳпçе туприпе
Капăрланса килтĕмĕр.
　　Манмастпăр *(3 хут)*
　　Ыр кăмăлпа чĕннине,
　　Манмастпăр *(3 хут)*
　　Хапха уçса хунине.

Ик куç тулли тăвансем
Пиçнĕ хурăн çырли пек,
Шăранаççĕ юррисем
Сарă кайăк кĕвви пек.
　　Манмастпăр *(3 хут)*
　　Çак кĕреке илемне,
　　Манмастпăр *(3 хут)*
　　Сăмахăрсен пиллĕхне.

Тавах, пĕлĕш-хурăнташ,
Ятăр пулĕ хисепре.
Ытарайми тус-юлташ,
Чысăр юлĕ ĕмĕре.
　　Манмастпăр *(3 хут)*
　　Вĕри хуплу техĕмне,
　　Манмастпăр *(3 хут)*
　　Ал сулса ăсатнине.

## УЙРĂЛУ ЮРРИ

***Галина СКВОРЦОВА кĕвви***

Пĕрре унта, тепре кунта
Куккукĕ авăтать иккен.
Тем пек аван пулсассăн та
Сехечĕ чарăнмасть иккен.

Каяс килмест, каяс килмест,
Ытамăртан тухас килмест.
Пĕрле ларса калаçнине,
Ял-йышăм, нимĕн те çитмест.

Çерем çинчи мерчен-ахах
Мĕн-ма ытла илемлĕ-ши,
Тăван-пĕтен калан сăмах
Чĕрешĕн ма пит сиплĕ-ши?

Эпир çуралнă вырăнсем
Уй хапхинчен курăнас çук,
Тăван патне çитес тесен
Çуран утса çитеес çук.

Пĕрре унта, тепре кунта
Куккукĕ авăтать иккен,
Тем пек аван пулсассăн та
Сехечĕ чарăнмасть иккен.

## КАÇАР, АТТЕ

*Галина СКВОРЦОВА кĕвви*

Хĕреспе тăрланчĕ пытару.
Виçĕ çаврăм турăмăр салхун.
Çăмăл пултăр терĕмĕр тăпру,
Канлĕ пултăр терĕмĕр ыйху...
Каçар, атте...

Масара лăпкать хĕвел ăшши.
Çулçă хĕмленет йĕри-тавра.
Ыйхусем канлех пулайĕç-ши?
Пулять-ши çăмăл çак тăпра?
Каçар, атте...

Пин-пин çухрăм утнă урунтах
Ларса юлчĕ вăрçăри йĕтре,
Юн тăкнин сăлтавĕ те умрах
Кайрĕ саланса ирхи тĕтрен...
Каçар, атте...

# ÇУМĂР, ÇУ

***Галина СКВОРЦОВА кĕвви***

Тӳпере çăлтăрсем
Вăй выляма пăрахрĕç,
Иксĕмĕре тумламсем
Вĕтелеме пуçларĕç.
Çумăр, çу, çумăр, çу,
Таврана савса чупту!
Савнă тусăм пĕрле чухне
Çунат сартăр юрату!

Йăлтăр çиçĕм çиçет,
Аслатиййĕ авăтать,
Шалкăм çумăр ислетет,
Иксĕмĕре юрататъ.
Çумăр, çу, çумăр, çу,
Таврана савса чупту,
Пин-пин тумлам ташшийĕнче
Çирĕплентĕр юрату!

Вăйлă çумăр тăкать,
Пур-ши тĕпĕ ку витрен?
Чун савниçĕм ыталать,
Чуп тăвать мана питрен.
Çумăр, çу, çумăр, çу,
Таврана савса чупту,
Сивĕре те, шăрăхра та
Тĕрĕслентĕр юрату!

## ТЕМШЁН МАНА ТИРКЕРЁÇ

*Галина СКВОРЦОВА кёвви*

Йăлтăр-йăлтăр шăрçа илтĕм
Мăя çакса çӳреме,
Шăрçи пултăр терĕм ылтăн,
Каччăсене илĕртме.
    Темшĕн мана тиркерĕç,
    Шăрçи ахах темерĕç.

Шăкăлт-шăкăлт пушмак илтĕм
Шупашкарта çӳреме,
Уттăм пултăр терĕм хӳхĕм,
Йĕкĕтсене илĕртме.
    Темшĕн мана тиркерĕç,
    Ури паха темерĕç.

Йăпăр-йăпăр çипуç илтĕм
Капăрланса çӳреме,
Парижра парик çĕлетрĕм
Пуянсене илĕртме.
    Темшĕн мана тиркерĕç,
    Эп хитрине сисмерĕç.

Çепĕç юрă суйлас терĕм
Концертсене çӳреме,
Сас ян-ян янратăр терĕм
Савнисене илĕртме.
    Темшĕн мана тиркерĕç,
    Чун савниçĕм темерĕç.

    Эх, качча илеп темерĕç...

## ШУРĂМПУÇ

*Юрий ШЕПИЛОВ кĕвви*

Алла-аллăн утрăмăр савнă тусăмпа
Шур пĕркенчĕк тăхăннă аслă урампа.
Шур çеçке пек çепĕççĕн пăхрĕ хăмăр куç,
Утрăмăр, сисмерĕмĕр – тухрĕ шурăмпуç.

Шурăмпуç, шурăмпуç, шурăмпуç
Кĕмĕл çутă сапать урама,
Шурăмпуç, шурăмпуç, шурăмпуç
Çулăмпа çунтарать чунăма.

Уй-хирте пĕр тикĕссĕн шăтнă хуратул,
Уй-хир пек ешертĕр-и пирĕн юрату,
Кĕмĕл çутă саптăр-и кĕмĕл шурăмпуç,
Умăмра хĕмлентĕр-и мăшăр хăмăр куç.



10. Заказ № К-3569

## САВНИ, ШУТЛАТӐП САН ҪИНЧЕН

*Юрий ШЕПИЛОВ кӗвви*

Кӗрен чечек кӗренлӗхӗпеле,
Ҫут ҫӑлтӑрсен хӗлхемлӗхӗпеле,
Ыр туйӑмсен хӗвеллӗхӗпеле,
Савни, шутлатӑп сан ҫинчен.

Шӑнкӑртатан шывсен хастарӗпе,
Тӑван уй-хирӗн пархатарӗпе,
Ҫунатлӑ чун-чӗре кӑварӗпе,
Савни, шутлатӑп сан ҫинчен.

Килес кунпа килес малашпалан,
Ҫитес ҫулпа ҫитес хаваспалан,
Чи сапӑр кӑмӑлпа, ялан-ялан,
Савни, шутлатӑп сан ҫинчен.

## ÇУРХИ СИПЕТ

*Юрий ШЕПИЛОВ кěвви*

Шăнкăр-шăнкăр кěвě шăратаççě
Улăхри асамлă çăлкуççем.
Ылтăн-ши эс, кěмěл-ши, çу каçě,
Пěлтерсем, тархасшăн пěлтерсем.

Ай-хай, вěрет, ай-хай çилсем вěрет,
Çил хумěпе çӳрет çурхи сипет.
Тухсам, савни, чěрем сана кěтет,
Ялан санпа пěрле пулас килет.

Çӳл тӳпе çиçет-çке йăлтăр-йăлтăр
Çěн çулхи илемлě чăрăш пек.
Умăмра çунать ик çутă çăлтăр,
Илěртет хěлхемлě эрешпе.

Пахчари саркайăксен саламě
Ик çунат хушать кашни чуна.
Юратап тесе паян калам-и,
Ыталам-и, тусăмçăм, сана?

# МАЛТАНХИ САВНИЕ

*Юрий ШЕПИЛОВ кĕвви*

Шăпчăксем пахчара юрăсем шăрататчĕç,
Янратса кĕмĕл витнĕ çурхи тĕнчене.
Эс те çамрăк ун чух, эп те туйăмлă каччă,
Алла-аллăн утаттăмăр кӳлĕ хĕрне.

Анчах çав шăпчăксем пире мар-мĕн
мухтанă,
Пире мар-мĕн пилленĕ çӳлти çăлтăрсем.
Сан валли урăх çын урăх çул такăрланă,
Ман валли те шăпа хывнă çĕн сукмаксем.

Çулсерен ăшăтать тăван ен пархатарĕ
Ик çемье таврăнсан хамăр ял ытамне.
Хăнара тĕл пулсан çепĕç юрă юрлар-и,
Асилсе малтанхи юрату хĕлхемне.

# АЙ-ХАЙ, ХĂНАМĂРСЕМ

*Валентина РУДНИКОВА кĕвви*

Йăлтăр кăна йăлтăр ярaплансем
Йăлтăр хĕвел ҫинче ҫиҫеҫҫĕ,
Ярапланпа ятлă хăнамăрсем
Шупашкар ытамне килеҫҫĕ.

Ай-хай, хăнамăрсем,
Ытарайми ҫыннăмăрсем,
Тăванла тараватпа,
Чăвашла вашаватпа
Сире кĕтсе илетпĕр,
Хисеп курки сĕнетпĕр.

Ылтăнах та кĕмĕл урхамахсем
Ҫухрăмах та ҫăмхи чĕркеҫҫĕ,
Урхамахпа хаклă хăнамăрсем
Шупашкар ытамне килеҫҫĕ.

Шурăях та шурă пăрахутсем
Анлă Атăл хумне сиреҫҫĕ,
Пăрахутпа сумлă хăнамăрсем
Шупашкар ытамне килеҫҫĕ.

# САРӐ КАЙӐК МАР-ШИ ЭСӖ?

***Валентина РУДНИКОВА кӗвви***

Ешӗлех сада кӗрсессӗн
Сассуна савса итлем:
Сарӑ кайӑк мар-ши эсӗ,
Ҫепӗҫ шӑпчӑк мар-ши эсӗ,
Савнӑ тусӑм, сарпикем?

Чечексем патне ҫитсессӗн
Тайӑлса пуҫа пӗкем:
Шурӑ лантӑш мар-ши эсӗ,
Хӗрлӗ мӑкӑнь мар-ши эсӗ,
Савнӑ тусӑм, сарпикем?

Ҫӳл тӳпе йӑл-йӑл ҫиҫсессӗн
Чунӑмра вылять хӗлхем:
Ҫутӑ ҫӑлтӑр мар-ши эсӗ,
Кӗмӗл уйӑх мар-ши эсӗ,
Савнӑ тусӑм, сарпикем?

## КАТĂРКАС

*Дмитрий **КУДАКОВ** кěвви*

Сирěн ялăр çуменче
Ретěн-ретěн катăркас.
Эп ку енче, эс леш енче,
Савнă тусăм, мěн тăвас?

Катăр-катăр катăркас,
Мěнле сирсе çул уçас?
Вулли ытла йěплě-çке,
Çырли ытла тутлă-çке!

Вăштăр çилěн хумěпе
Савни сасси илтěнет.
Ытарайми ай юррипе
Пике чуна илěртет.

Çырă куçлă сарпикен
Кăмăлěсем мěнле-ши,
Ěмěр пěрле утма тивсен
Катăркас пек чикмě-ши?

# САВНИÇĔМ, ПИРĔН ЮРАТУ

***Виктор СЕРГЕЕВ кĕвви***

Пин-пин çеçке пекех хитре,
Тӳпемĕр, санăн çунату.
Çӳл тӳперен те çӳллĕрех,
Çӳл тӳперен те çӳллĕрех,
Савниçĕм, пирĕн юрату.

Мăн улăппа пĕрех ларать
Ем-ешĕл çĕлĕклĕ сăрт-ту.
Патвар туран та вăйлăрах,
Патвар туран та вăйлăрах,
Савниçĕм, пирĕн юрату.

Çĕр хум çумне пин хум ярать,
Çĕн тинĕс, санăн хăвату.
Çав тинĕсрен те тарăнрах,
Çав тинĕсрен те тарăнрах,
Савниçĕм, пирĕн юрату.

## ИК ЧЁРЕ ЮРРИ

***Виктор СЕРГЕЕВ кěвви***

Хěвел йăл-йăл çиçет,
Çурхи кунсем килет,
Çурхи кунсем килет,
Çеçке çурса пиллет:

Ик чěрене пěр-пěрне юратма,
Ик чěрене пěр-пěрне ăнланма,
Ик чěрене пěр чěре пек пулма,
Пěр çулпала алла-аллăн утма.

Тӳлеккěн каç пулать,
Сар кайăк юр юрлать,
Сар кайăк юр юрлать,
Юррипеле сунать:
Ик чěрене...

Тěнчен шурри те пур,
Тěнчен хури те пур,
Анчах çăватчě юр,
Паян пиллет ав çур
Ик чěрене...

# ПИРĔН ВĂЙĂ КАРТИ

*Олимпиада АГАКОВА кĕвви*

Сар хĕвелĕ ялкăшать,
Ачаш çилĕ вăркăшать,
Пире лайăх вĕренме,
Савăнса-кулса ÿсме.

Уçă сасă ян каять,
Шкул пахчине янратать,
Килĕр вăйă картине,
Ваçук тăтăр варрине.

Аллуна та вылятан,
Уруна та хускатан,
Пултаратпăр юрлама,
Тăпăр-тăпăр ташлама.

Эх, илемлĕ-çке ташши,
Юрататъ ăна кашни!
Шăранатъ вăййи-кулли,
Çут малашлăх ку тулли.

## САВНИ, УÇСАМЧЧĔ КАНТĂКНА

***Виталий НИКОЛАЕВ кĕвви***

Савни, уçсамччĕ кантăкна!
Çил варкăшĕ пулса
Вĕçсе эп кĕрĕп сан патна,
Телей сунса.

Савни, уçсамччĕ кантăкна!
Хĕвел шевли пулса
Вĕçсе эп кĕрĕп сан патна,
Телей сунса.

Савни, уçсамччĕ кантăкна!
Кĕсле кĕвви пулса
Вĕçсе эп кĕрĕп сан патна
Телей сунса.

## ТУПМАЛЛИ

Уçланкăри палан ........ 3
Шурă-шурă акăшсем ........ 4
Юррăмпа саламлатăп сана ........ 5
Çĕрĕм-шывăм, Чăваш ен ........ 6
Паттăр Андриян ........ 7
Ункă шывĕ ........ 8
Ан васка ........ 9
Кĕтерне ........ 10
Нумай пулать эсир килменни ........ 11
Юрату ........ 12
Килсем, савни ........ 13
Çурхи шанчăк ........ 14
Ан кай, савни ........ 15
Икĕ пуçкăшăлĕ ........ 16
Улма пахчинче ........ 17
Мĕн-ма пăхатăн ман çине ........ 18
Ылтăн çĕрĕ ........ 19
Эпир ĕçе тухсассăн ........ 20
Кăмăл-туйăм ........ 21
Сан куçусем ........ 22
Хăмла пахчи ........ 23
Чăваш ен вальсĕ ........ 24
Тус-тăван пулсассăн ........ 25
Ах, вĕрене ........ 26
Ан ман мана ........ 27
Хăмлаçăсен юрри ........ 28
Вăй патăр ........ 29
Кĕпер ........ 30
Лантăш ........ 31
Пурнăç юрри ........ 32
Пинерпи ........ 33
Ан тăк, чиеçĕм, çеçкӳне ........ 34
Çăлтăр куçăм ........ 35

Ушкăн-ушкăн ........ 36
Анисса юрри ........ 37
Юратнăран ........ 38
Альбина юрри ........ 39
Сӳнеймест чунри юрату ........ 40
Кам валли ........ 41
Спасов халăх асĕнче ........ 42
Мăшăр кăвакарчăн ........ 43
Авланмарăм вăхăтра ........ 44
Мĕнле хăйса калам-ши ........ 45
Ăнлансамччĕ манăн чĕрене ........ 46
Тăванăм, тăванăм ........ 47
Тăван çĕршывăм – Чăваш ен ........ 48
Тав юрри ........ 49
Ĕмĕр сакки сарлака ........ 50
Пурнăçăм – кунçулăм ........ 51
Чавса çывăх – çыртма çук ........ 52
Салам, Шупашкар ........ 53
Пирĕн савнă ялăмăр ........ 54
Кĕтсе илĕп тусăма ........ 55
Ылтăн мар-ши эс, анне ........ 56
Туслăх юрри ........ 57
Пехил ........ 58
Ан кай, тăван ........ 59
Икĕ витре ........ 60
Ялĕ ятне ăраççĕ ........ 61
Çурхи каç вальсĕ ........ 62
Текерлĕк ........ 63
Почта хĕрĕ ........ 64
Ан кулян, тăван ........ 66
Ăçта-ши халь çав çуркунне ........ 67
Хĕртантăшсем ........ 68
Анне ........ 69
Хурăнлăхри пилеш ........ 70
Чăваш тĕрри ........ 71

Çинçеех те кĕпер ........................................ 72
Вăйăра ........................................ 73
Мăшăр çăлтăр ........................................ 74
Ай, выляр-и, выляр-и ........................................ 75
Сан ятупа ........................................ 76
Пирĕн юрату ........................................ 77
Тил юртать ........................................ 78
Курма килсен ........................................ 79
Аякри тантăша ........................................ 80
Юратуçăм, юрату ........................................ 81
Аса илни ........................................ 82
Пирĕн анне ........................................ 83
Малтанхи юратăвăм ........................................ 84
Чăваш çĕрне килсе курсамăр ........................................ 85
Икĕ пилеш ........................................ 86
Салтак тўми чечекĕ ........................................ 87
Акăшсем ........................................ 88
Çыру çырсамăр салтаксем патне ........................................ 89
Юрла, салтак ........................................ 90
Таврăнать çартан салтак ........................................ 91
Салам, çуралнă çĕр ........................................ 92
Хупахçăсен юрри ........................................ 93
Çурхи юрă ........................................ 94
Ан ман, тăван ........................................ 95
Аннемĕрсем ........................................ 96
Пуçăм кайрĕ çаврăнса ........................................ 97
Атте-аннен çуралнă кунĕ ........................................ 98
Кĕреке çаври ........................................ 99
Никама та ан кала ........................................ 100
Кил-йыш юрри ........................................ 101
Чунăма ан хускат ........................................ 102
Йăл кулсам, савниçĕм ........................................ 103
Ай-хай, тусăм, янратар ........................................ 104
Шăнкăр-шăнкăр çăлкуç ........................................ 105
Мĕн мантарчĕ-ши ........................................ 106

Виçĕ çурта .......... 107
Каласам, йăмра .......... 108
Шетмĕ шывĕ .......... 109
Шураппасем .......... 110
Ылтăн каç .......... 111
Сарă кайăк .......... 112
Шурă лантăш .......... 113
Чăваш ен юрри .......... 114
Кайрикас каччи .......... 115
Эс ирех тăрсассăн .......... 116
Натали .......... 117
Телей сунатăп .......... 118
Ĕмĕт .......... 119
Хĕвелтухăç, хĕвеланăç .......... 120
Несĕл юрри .......... 121
Икĕ акăш .......... 122
Шур хуламăр Шупашкар .......... 123
Вера, Вероника .......... 124
Çухалман эп .......... 125
Кĕмĕл туй .......... 126
Сарпикем, хĕр-пикем .......... 127
Кĕлчечек .......... 128
Епле хитре, савниçĕм, эс паян .......... 129
Икĕ кăмăл пĕр пулсан .......... 130
Хĕвеллĕ çуркунне .......... 131
Саркайăксен сассипеле .......... 132
Юрату ячĕпе .......... 133
Эп пĕлетĕп .......... 134
Палан шап-шурă ларнă вăхăтра .......... 135
Эй, çĕршывăмăр, Чăваш енĕмĕр .......... 136
Каçрăмăр, каçрăмăр .......... 137
Эс çуралнă, тăванăм, паян .......... 138
Халех ан кай, тăван .......... 139
Манмастпăр .......... 140
Уйрăлу юрри .......... 141

Каçар, атте ....................................................142
Çумăр, çу ....................................................143
Темшĕн мана тиркерĕç ....................................................144
Шурăмпуç ....................................................145
Савни, шутлатăп сан çинчен ....................................................146
Çурхи сипет ....................................................147
Малтанхи савние ....................................................148
Ай-хай, хăнамăрсем ....................................................149
Сарă кайăк мар-ши эсĕ ....................................................150
Катăркас ....................................................151
Савниçĕм, пирĕн юрату ....................................................152
Ик чĕре юрри ....................................................153
Пирĕн вăйă карти ....................................................154
Савни, уçсамччĕ кантăкна ....................................................155

Юрий Семенович Семендер
**ЧУВАШСКАЯ КРАСАВИЦА**
**Песни**

Редактор *А. И. Дмитриев*
Художественный и технический
редактор *Т. П. Софронова*
Корректор *Н. П. Шутеева*

Подписано к печати 14.12.2002 г. Формат 70x90 1/32. Бумага
офсетная № 1. Усл. печ. листов 5. Тираж 2000 экз.
Заказ № К-3569. Цена свободная.

РГУП «ИПК «Чувашия».
428019, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.